Пĕр №-рĕ 10 пус — 19-мĕш çул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 октябĕр 14 кĕçнерникун 236 (4748)-мĕш №

# Чǎваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чǎваш Обкомĕпе Тĕпĕçтǎвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

Телефонсем: Редакторǎн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Дежурнǎйǎн 6—23

## Партире тǎман массǎсемпе çирĕпрех çыхǎнмала

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн черетлĕ Пленумĕ суйлав кампанин ыйтǎвĕсене пǎхса тухрĕ. Пленум парти организацисен ССР Союзĕн Аслǎ Совечĕн суйлавĕ май тумали организацилĕ тата агитацилĕ-пропагандисла ĕçĕсем çинчен йатарласах решени йышǎнчĕ. Çак ĕçе Тĕп Комитет пит пысǎк вырǎна хурать. Вǎл суйлав кампанийĕнче ĕçе татса паракани пулĕ.

Пирĕн çĕршывǎн историнчи пит пысǎк тапхǎрсене палǎртса тǎракан кунсем пур. **Çавǎн пек паллǎ кунсенчен пĕри 1937 çулти декабрĕн 12-мĕшĕ пулать.** Вǎл кун рабочисемпе хресченсен аслǎ государствинче пурǎнакан мĕлйуншар çынсем историре пирвайхи хут çĕршыв управленин аслǎ органне—вĕçне çити демократисǎм тǎрах—пурне те тивĕç, пĕр тан тата тӳрех суйламали суйлав правипе вǎрттǎн сасǎласа суйлаççĕ.

1937 çулти декабрĕн 12-мĕшĕ—пирĕн нумай нацилĕ çĕршыв ССР Союзĕн Аслǎ Советне суйлама тǎратнǎ кандидатсемшĕн сасǎлама бӳллетенсемпе суйлав урнисем патне пымали кун çеç мар, тата вǎл пысǎк хаваслǎхпа, пĕтĕм сaспа: епĕр советсемшĕн, епĕр Ленин—Сталин партийĕшĕн, тесе тата тепĕр хут каламали кун пулать. Суйлав кунĕ çинчен пĕлтернине ĕççыннисем пысǎк çĕкленӳпе, чǎннипех пĕтĕм халǎх хĕпĕртенипе кĕтсе илни çавǎнтан килет те ĕнтĕ. Мускаври, Ленинградри, Киеври, Харьковри тата ытти хуласенчи, колхозлǎ йалсенчи халǎх, Хĕрлĕ çар чаçĕсем, интеллигенци правительствǎ постановленине хĕрӳллĕ саламлассĕ, суйлав кампанине организацилĕ пулса, большевикла иртерме хатĕрри çинчен пĕлтереççĕ.

Кун çĕрлерен мĕн пек ǎраснa, пирĕн ирĕклĕ çĕршыв та капиталисǎмла çĕршывсенчен çавǎн пекех ǎрасна, вĕсенче буржуалǎ демократисǎмǎн йулашки тĕпренчĕкĕсене те лучǎркаса тǎкнǎ. Пирĕн çĕршыври суйлав кампанийĕ кун çĕрлерен ǎрасна пекех—халǎхǎн сассине, унǎн ирĕкне, совĕçне фашиссен аттипе таптаса лапчǎтнǎ çĕршывсенчи суйлав кампанийĕнчен ǎрасна. Вǎл государствǎсенче, халǎха пусмǎрлани пуç пулса тǎракан çĕрте, пĕр тан суйлавсем вырǎнне пуç пулса тǎракан класǎн—„арийцǎсен расин“ привилегийĕсене туса хунǎ çĕрте, ĕççыннисем суйлав урни патне пырасшǎн мар йе пырсан та ирĕксĕр, хăйсене хушнǎ повиннǎçе тума пыраççĕ, фашисла варварствǎн тĕттĕм çĕрĕнче ниçта сутǎ курмасǎр пыраççĕ.

Совет çĕршывĕнче мĕлйуншар çынсем суйлав урни патне хǎйсен çĕршывĕн хǎватне шанса тǎрса, хǎйсен ыранхи кунне шанса тǎрса пыраççĕ. Çакǎн пек шанса тǎни çинчен рабочисем, колхозниксем, служǎшчисем нумай çĕрте пулса иртекен митингсенче калаççĕ. Пирĕн çĕршывǎн пуласлǎхĕ çине, хǎйсен вǎйĕ çине çавǎн пек шанса тǎни çинчен Мускаври Орджоникидзе йачĕпе тǎракан станкостройени савǎтĕнчи рабочисем хǎйсен резолюцийĕнче уççǎн каланǎ:

— ССР Союзĕн Аслǎ Совечĕн суйлавĕ патне епĕр хамǎрǎн хǎват çине туллин шанса, хамǎрǎн ыранхи тата телейлĕрех пулас кун пирки шанчǎклǎн пулса пыратпǎр. Троцкисла-бухаринла сǎтǎрçǎсен тата шпионсен—фашисǎма тара кĕрĕшнĕскерсен бандинчи нимĕнле çĕленкалтасем те, нимĕнле тǎшмансем те пире çултан пǎрса йараймĕç...

Хуласенче тата йалсенче, заводсенче, шахтǎсенче, чукунçулсем çинче, колхозсенче политикǎлǎ активлǎхǎн çĕнĕ хумĕ çĕкленсе пырать. Пирĕн çĕршывра политикǎлǎ активлǎх вǎл, йаланхи пекех, производствǎлǎ çĕкленӳпе çыхǎнса пырать. Кǎмрǎк кǎларас, металл, машинсем, пир-авǎрсем туса кǎларас плансене тултарассишĕн тата иртерсе тултарассишĕн стахановла ǎмǎрту тата çӳлерехе хǎпарса пырать.

Ĕççыннисем Сталинла Конституцийе, хǎйсен прависене, суйлав саккунне вĕренекен пиншер кружоксем, массǎсем патне большевикла сǎмах илсе пыракан халǎх хушшинчи пиншер агитатǎрсем,—ку вǎл массǎсен политикǎлǎ активлǎхне кǎтартаканни çеç мар, вǎл пирĕн халǎхǎн **идейлǎ** ӳсĕмне кǎтартакан аслǎ та чаплǎ картин.

**Анчах цифǎрлǎ кǎтартусем хыççǎн кайса агитацин пахалǎхĕ çине, ǎнлантарулǎ ĕçĕн тарǎнлǎхĕ çине çавǎрǎнса пǎхман парти организацисене, агитатǎрсене хисепĕ йенчен нумайрах йарассишĕн тǎрǎшса, кайакан çынсене тата вĕсем ĕçне тĕрĕслемен парти организацисене асǎрхаттарса хǎвармала.** Кашни райкомǎн **хатĕрлесе çитернĕ**, Конституцине тата суйлав саккунне лайǎх пĕлекен, коммунисла парти ĕçне сыхласа тǎма пултаракан пропагандиссемпе агитатǎрсен **пысǎках мар, анчах тĕрĕсленнĕ группине** тумала.

Çĕршывра политикла активлǎхǎн çĕнĕ çĕкленӳвĕпе **партире тǎман массǎсене тата ытларах парти патнелех çывхартас**, халǎх шухǎшне Аслǎ Советǎн кандидачĕсем пулма палǎртакан çынсене усǎлǎ пулма мобилизацилес ĕçре усǎ курмала. Агитатǎрсемпе пропагандиссен Аслǎ Совета—государствǎ влаçĕн чи аслǎ органне суйланин пахалǎхĕ çинчен суйлавçǎсене ывǎнма пĕлмесĕр ǎнлантарса памала. Аслǎ Совет составне рабочи класǎн, социалисǎм ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин партин тата совет влаçĕ ĕçĕшĕн пĕтĕм вǎйне хурса ĕçлекен çынсем кĕмелле. Аслǎ Совета пирĕн тǎван çĕршывǎн тĕрĕс ывǎлĕсем политикǎла опытлǎ боецсем тата руководительсем, тǎшмансен пур тĕрлĕ тата мĕн пур хǎтланǎвĕсене ним йулмиччен аркатса тǎкма пултараканcем кĕмелле.

Аслǎ Совета суйлама хатĕрленессин икĕ уйǎхĕ, вǎл—парти организацисем массǎпа çыхǎнса тǎрассине тĕрĕслетес тĕлĕшпе çине тǎрса ĕçлемели икĕ уйǎх. Парти организацисем депутатсем пулма кандидатсем тǎратнǎ чухне партире тǎман çынсенчен уйрǎмǎн мар, партире тǎманнисемпе пĕрле кандидат çинчен калаçса татǎлма тивĕçлĕ, суйлав кампанинче чи кирлĕ—партире тǎманнисенчен уйǎрǎлса каймасǎр ĕçлени пулнине асра тытмала.

Сталинǎн тарǎн шухǎшлǎ сǎмахĕсене пĕр минутлǎха та манма йурамаст:

„Массǎсемпе çыхǎну тытни, çав çыхǎнǎва çирĕплетни, массǎсен сассине итлеме хатĕр пулни,—акǎ мĕнре большевикла руководствǎн вǎйĕпе ǎна никам çĕнтерейменлĕхĕ.

Йĕрке пекех йышǎнмала, большевиксем халǎхǎн сарлака массипе тачǎ çыхǎну тытнǎ чухне, вĕсем никам çĕнтерейми пулаççĕ. Йалтах урǎхла, большевиксем массǎран татǎлсанах, вĕсем бюрократла тутǎхпа витĕнсенех, вĕсем нимĕн вǎйсǎр тǎрса йулаççĕ, усǎсǎр пулса тǎраççĕ“.

Партире тǎман массǎсемпе çыхǎну тытассине вǎйлатасси—вǎл ĕççыннисен ыйтǎвĕсемпе нушисем çине çавǎрǎнса пǎхассине вǎйлатмаллине пĕлтерет. Ку вǎл хǎшпĕр çĕрте совет аппаратĕнче вырнаçнǎ „бюрократла тутǎха“ пĕтермеллине пĕлтерет. Партире тǎман актив хушшинче, Совет интеллигенцийĕ хушшинче массǎлǎ-политкǎла ĕçе анлǎн сармала. Çак ĕçе партири большевиксен вǎйĕпе çеç мар, партире мар большевиксен вǎйĕпе те тума май пур, тумала та. Партире тǎман служǎшчисем, инженерсемпе техниксем, культурǎ фронтĕнчи работниксем хушшинче лайǎх ĕçлекен, социалисǎм ĕçĕшĕн чунтан тǎрǎшса ĕçлекенсем халĕ темĕн чухлех пур!

ССР Союзĕн Аслǎ Советне суйламали кун çинчен ССР Союзĕн Тĕпĕçтǎвкомĕ йышǎннǎ постановленине саламлакан резолюцисенче рабочисемпе колхозниксем, красноармейǎсем хǎйсем сыхǎ тǎни çинчен калаççĕ. Халǎхǎн çак ӳснĕ сыхлǎхĕпе йут çынна, тǎшмана суйлав комиççине кĕртмеле мар тума, тǎшманла агитацине çĕмĕрсе тǎкма усǎ курмала, суйлав участкисенче кашни суйлавçǎн сассине Аслǎ Совета суйлама палǎртнǎ хамǎр çĕршыври лайǎх çынсемшĕн памала тǎвас пулать.

1937 çулти декабрĕн 12-мĕшĕ сǎрт хыçĕнче мар. Çак куна пĕтĕм халǎха политикǎла хатĕрлемелле! ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн пленумĕ парти организацисене суйлав кампанине иртернĕ чух тумали организацилĕ тата агитацилĕ ĕçсене вǎйлатма хушрĕ. Халǎха суйлава хатĕрлесси—вǎл кашни организацишĕн, кашни большевикшĕн екзамĕн, вĕсем массǎсемпе çыхǎну тытнине тĕрĕслени, вĕсем политикǎла кĕрешме пултарнине хыттǎн сǎнани.

Аслǎ Совет суйлавĕ, нимĕнле иккеленӳ те çук, халǎх хǎйĕн тǎван çĕршывне йуратнине, ǎна кирек мĕнле тǎшманран та сыхлама хатĕр тǎнине хǎличчен курманла кǎтартса паракан демонстраци пулса тǎрĕ. Суйлав кунĕнче—ССР Союзĕ социалисǎмǎн никам çĕмĕреймми крепǎçĕ, пирĕн вǎй çине тапǎнма хǎтланакан кирек мĕнле тǎшман та перĕнсе саланса кайма пултаракан гранит пулса тǎнине пĕтĕм тĕнче тата тепĕр хут курса ĕненĕ. 1937 çулти декабрĕн 12-мĕшĕ — çак кун совет халǎхĕ Октябрьти Аслǎ Социалисǎмла революцире кĕрешсе илнисене çывǎрмасǎр сыхланине пĕтĕм тĕнчене кǎтартĕ.

(**„Правда“ умстатйи, 1937 çул, октябрĕн 13-мĕшĕ**).

## ПСК(б)П Тĕпкомĕн черетлĕ пленумĕ çинчен информацилĕ пĕлтерӳ

Октябрĕн 11—12-мĕшĕсенче ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕн черетлĕ Пленумĕ пулса иртнĕ.

Пленум ССР Союзĕн Аслǎ Советне суйлас тĕлĕшпе пыракан суйлав кампанин ыйтǎвĕсене пǎхса тухса, кирлĕ решенисем йышǎннǎ.

Пленум, кунсǎр пуçне, парти организацисен ССР Союзĕн Аслǎ Советне суйлассипе çыхǎнса тǎракан организацилĕ тата агитацилĕ-пропагандǎлǎ ĕç çинчен решени йышǎннǎ.

Пленум ПСК(б) Парти Тĕп Комитет секретарне Н. И. Йежов йулташа ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕн политбюро членĕн кандидатне кĕртнĕ.

—*○○○*—

## ССР Союзĕн ĕççыннисем суйлав кампани пуçланнине хĕрӳллĕн саламлаççĕ

ССР Союзĕн Ĕçтǎвакан Тĕп Комитечĕ ССР Союзĕн Аслǎ Советне суйламали кун çинчен йышǎннǎ постановленине пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пысǎк хаваслǎхпа кĕтсе илчĕç. ССР Союзĕн Аслǎ Советне суйламали суйлав кампанийĕ — политикǎлǎ массǎлǎ чи пысǎк кампани — пуçланнине пĕтĕм Совет халǎхĕ хĕрӳллĕн саламлать.

Пĕтĕм çĕршывра йышлǎ халǎхпа митингсем тата пухусем пулса иртеççĕ. Ĕççыннисен мĕлйунлǎ массисем хǎйсен резолюцийĕсенче пурте пĕр сасǎпа: декабрĕн 12-мĕшĕнче пурте суйлава пырса, партири тата партире тǎман чи лайǎх большевиксемшĕн сасǎ паратпǎр, тесе калаççĕ.

ССР Союзĕн Аслǎ Советне пĕрремĕш депутата партин тата халǎхсен аслǎ çулпуçне, ĕç етемлĕхĕн генийне Сталин йулташа суйлама сĕннине пысǎк хаваслǎхпа ал çупса йышǎнаççĕ.

Мускаври електрокомбинат рабочийĕсем хǎйсен резолюцийĕнче çапла çыраççĕ:

„Пирĕн аслǎ Союзра пурǎнма хаваслǎ. Епĕр Октябрьти социалисǎмла аслǎ революци 20 çул тултарнǎ тĕле социалисǎмǎн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ çĕнтерӳвĕсемпе, Сталинла Конституципе, тĕнчери чи демократилĕ суйлав саккунĕпе çитетпĕр. Епĕр пурте пĕр çын пек суйлава пыратпǎр! Епĕр Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр шанса тǎратпǎр, уншǎн епĕр пĕтĕм чĕререн тǎратпǎр. Епĕр пурте пĕр çын пек пирĕн парти, Ленин—Сталин партийĕ тǎратакан кандидатсемшĕн сасǎлапǎр!“.

Ленинградри „Скороход“ фабрикри митингра рабочисем пилĕк пин çынна йахǎн пулнǎ. Рабочисем митингра йышǎннǎ резолюцире çакна уйрǎмах палǎртаççĕ:

„Халǎхǎн усал тǎшманĕсен кайашĕсем —троцкисла-бухаринла, Рыковла, фашисла шпионсем хǎйсен вараланчǎк аллисене суйлав урнисем патне тǎсма хǎтланассине епĕр лайǎх пĕлетпĕр. Епĕр сыхǎлǎхлǎ пулатпǎр, фашиссене тара кĕрĕшнĕ усалсене тǎрǎ шыв çине кǎларма йаланах хатĕр тǎратпǎр. Епĕр хамǎрǎн сасǎсене çĕршывǎн чи лайǎх çыннисемшĕн, Совет халǎхне çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне илсе пыракан коммунисла аслǎ партишĕн парǎпǎр“.

(ТАСС).

## Вайан-Кутурйе вилнĕ*)

ПАРИЖ, 11-Х. Гавас агенстви пĕлтернĕ тǎрǎх, Франци парламентĕнчен коммунисла депутачĕ Вайан—Кутурйе октябрĕн 10-мĕшĕнче каçхине вилнĕ.

* * *

Поль Вайан-Кутурйе, Францири Коммунисла партин тата халǎх фрончĕн паллǎ деятелĕ. 1892 çулта çуралнǎ. 1916 çулта революцилĕ йухǎма хутшǎннǎ. Империалисǎмла вǎрçǎ вǎхǎтĕнче Вайан-Кутурйе оборонǎлǎ тата жовинисла етемсене хирĕç хастарлǎн кĕрешнĕ.

1918 çулта Вайан—Кутурйене Парижри суйлав округĕнчен депутатсен палатине суйланǎ. Çак вǎхǎтран пуçласа вǎл Францири социалисла партин революцилĕ пайне Коминтерн çумне пĕрлештересшĕн кĕрешет. 1920 çулта коммуниссен партине кĕнĕ.

1921 çулта Вайан Кутурйене Коминтернǎн виççĕмĕш конгресне кайма делегата суйланǎ. Çакǎн хыççǎн ǎна Франци компартин Тĕп Комитет членне суйлавǎ.

Чаплǎ журналис Вайан Кутурйе Францири коммуниссен партин тĕп органĕн—„Йуманите“ хаçатǎн ĕçне хастарлǎн хутшǎнса ĕçленĕ. 1935 çулти октябрĕр уйǎхĕнчен пуçласа, ǎна „Йуманите“ хаçатǎн аслǎ редакторне суйласа лартнǎ. Çак ĕçре Вайан—Кутурйе Францире халǎх фрончĕ туса ǎна çирĕплетессишĕн хастарлǎн кĕрешнĕ. Доррио фашисǎн тата унǎн троцкисла бандин шпионлǎ тата преда тĕлле ĕçĕсене тǎрǎ шыв çине кǎларнǎ. Марсел Кашенпа пĕрле „Йуманите“ хаçатǎн корреспонденчĕ пулса Совета хирĕçле троцкисла центрǎн Мускаври процесне килнĕ. Хǎйĕн статйисенче вǎл çак усал шпионсене, провокатǎрсене, фашисǎм агенчĕсене нимĕн хĕрхенмесĕр тǎрǎ шыв çине кǎларнǎ. Чылай статйисенче Вайан—Кутурйе Совет Союзĕнчи Социалисǎмǎн чаплǎ çĕнтерĕвĕсене кǎтартнǎ.

Революцилĕ ĕç тунǎшǎн Вайан—Кутурйене темиçе хутчен те хĕсĕрленĕ.

Вайан—Кутурйе „вǎрçǎра пулнисен“ революцилĕ ассоциацин ĕçĕнче хастарлǎн, хутшǎнса ĕçленĕ. Вǎрçǎ хǎрушǎлǎхне тата фашисла агрессǎрсене хирĕç хытǎ кĕрешнĕ.

Вайан—Кутурйе республикǎлǎ Испани майлǎ тǎнǎ, ǎна пулǎшасшǎн хастарлǎ ĕçленĕ. Вǎл Баск халǎхне пулǎшас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççи председателĕ пулнǎ.

Вайан—Кутйуре вилни Францири компартипе халǎх фрончĕшĕн пысǎк çухату пулать.

*) „Чǎваш Коммунĕн“ 235-мĕш номерĕнче пĕлтернине вула.

**Китайри вǎрçǎ.**

Йапони захватчикĕсем Китай столици—Китайри пысǎк хула Нанкин çине бомбǎсем варвǎрла пǎрахса, çуртйĕрсене аркатса тǎкнǎ тата пиншер мирлĕ граждǎнсене вĕлернĕ. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Нанкинǎн пĕр квартǎлĕ бомбǎсем пǎрахнǎ хыççǎн.

(Союзфото).

## Суйлав кампанийĕ пуçланчĕ

Тепĕр икĕ уйǎхран, декабрĕн 12-мĕшĕнче, пирĕн çĕршыв Сталинла Конституци тǎрǎх Советлǎ Социалисǎмлǎ Республикǎсен Союзĕн Аслǎ Советне хǎйĕн представителĕсене суйлать.

Камшǎн сасǎламала-ха? Хамǎрǎн Тǎван Çĕршывǎн кашни гражданинĕ суйлав урни патне пынǎ чухне хǎйне çакǎн пек ыйту парать. Влаçǎн Аслǎ органне кама суйласа йамала-ха? Вĕт хамǎрǎн социалисǎмла отечествǎшǎн, рабочисен, хресченсен тата служǎшчисен интересĕсемшĕн пĕтĕм чĕререн тǎракан çыншǎн сасǎ парас пулать.

Çак ыйту çине татǎклǎ ответ илме кашни суйлавçǎ пирĕн Тǎван Çĕршыв ĕлĕкхи вǎхǎтра мĕнле пулнипе тата халĕ мĕнле пулса тǎнине аса илтĕр. Çамрǎксем старикСенчен—рабочисенчен тата колхозниксенчен—ыйтса пĕлчĕр,—вĕсен пурнǎçĕ патша влаçĕ чухне, капиталисǎм стройĕ чухне мĕнле пулнǎ?

Ĕлĕкхи вǎхǎтра Российǎра кам ыркурса пурǎннǎ? Унчухне помещиксем, фабрикантсем, кулаксем, торговецсем ыркурса, ашкǎнса пурǎннǎ. Çав ушкǎнǎн пуçĕнче патша тǎнǎ. Вĕсем патшапа пĕрле халǎхǎн ĕнси çинче ларнǎ, халǎха çаратнǎ, халǎх тарĕпе самǎрланнǎ. А ĕççыннисен мĕлйунлǎ массисем мĕнле пурǎннǎ-ха? Вĕсем тул çутǎличчен пуçласа çĕрлеччен тӳсме çук йǎвǎр ĕçленĕ, çапах выçǎ пурǎннǎ, çук пурнǎçпа аптранǎ, вĕсен нимĕнле права та пулман, безработицǎ пулнǎ, ыранхи куна мĕнле пурǎнса иртерес-ши тесе йаланах кулянмала килнĕ. Çакǎн пек пулнǎ патша Российĕнче ĕççыннисен пурнǎçĕ. Йут çĕршывсенче рабочисемпе хресченсен пурнǎçĕ халĕ те çавǎн пекех-ха. Совет Союзĕнче çеç ĕççыннисен пурнǎçĕ пĕтĕмпех урǎхла.

Октябрьти Социалисǎмла Аслǎ революци Совет Союзĕнчи халǎхсене ĕмĕрхи пусмǎртан хǎтарчĕ, пирĕн çĕршывра Совет влаçĕ туса хучĕ.

Унтанпа çирĕм çул иртрĕ, халĕ ĕнтĕ епĕр аслǎ çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсен итогне тǎватпǎр. Российа пĕтĕмпех çĕнелсе карĕ. Пирĕн çĕршывра експлоататǎрсем—помещиксемпе капиталиссем çук, вĕсене çавǎрса çапса кǎларса пенĕ. Талкĕшпех коллективланǎ никĕс çинче кулаксен класне пĕтернĕ. Совет Союзĕнче социалисǎм татǎкланах, йаланлǎхах çĕнтерчĕ. Рабочи клас тата хресченсем хǎйсем те тĕпренех улшǎнчĕç. Патша Российĕ „халǎхсен тĕрми“, катǎрга пулнǎ. Совет Союзĕнче пур национальнǎçсем те тǎванлǎ туслǎхпа пурǎнаççĕ.

Ĕлĕк пуш вырǎнсем пулнǎ йе мĕскĕн пĕчĕк фабриксем ларнǎ çĕрте, улǎпла пысǎк социалисǎмла фабриксемпе заводсем ӳссе ларчĕç. Совет влаçĕ пит пысǎк заводсем: трактǎрсем, комбайнсем тата ытти йалхуçалǎх машинисем тǎвакан заводсем туса лартрĕ. Революцичченхи вǎхǎтра йутçĕршывсенчен кӳрсе тǎнǎ машинсене—автомобилсене, самолетсене, станоксене тата ытти тĕрлĕрен чи сложнǎй машинсене,—епĕр халĕ хамǎрǎн заводсенче, хамǎрǎн материалсенчен тǎватпǎр. Вǎрçǎччен хипе танлаштарсан, епĕр çĕр айĕнчен нефт виçĕ хут нумайрах, кǎмрǎк тǎватǎ хут нумайрах кǎларатпǎр. Хурǎç тǎватǎ хут нумайрах шǎрататпǎр. Пирĕн социалисǎмла промышленнǎç, патша Российĕнче пулнипе танлаштарсан, вунǎ хут нумайрах продукци туса кǎларать.

Ĕлĕк хресченсен татǎк-кĕсĕк анисем пулнǎ çĕрте, халĕ колхозсен куç виçейми анлǎ уйхирĕсем. Патша влаçĕ чухне помещиксен, патшан тата унǎн тǎванĕсен, мǎнастырсен, кулаксен пулнǎ 150 мĕлйун гектар ытла çĕре совет влаçĕ колхозсене тӳлевсĕр ĕмĕрлĕхе пачĕ. Октябрĕр революцийĕ пуличчен пирĕн çĕршывра трактǎрсем пулман. Халĕ социалисǎмла уйхирсенче 450 пин трактǎр ĕçлет. Вĕсем 8.300 пин лашапа ĕçлессине ĕçлеççĕ. Уйхирсенче 121 пин комбайн ĕçлеççĕ, вĕсем колхозниксен тата совхозсенчи рабочисен ĕçне çǎмǎллатаççĕ. Кǎçал пĕтĕм çĕршыври колхозсемпе совхозсем пит ǎнса пулнǎ тырпулǎ пуçтарса кĕртеççĕ. Колхозниксем тӳрĕ ĕçленине пула колхоз çĕрĕ вǎйлǎ тухǎç парать. Патша Российĕнче йалĕсем те вĕт: нееловкǎ, дырявино, заплатино, голодухино—йатлǎ пулнǎ. Патша Российĕнче ĕçхресченĕсем выçǎ, çĕтĕк-çурǎк пурǎннǎ. Совет Союзĕнче колхозла йал чечекленсе ӳссе, пуйанланса пырать.

Рабочисемпе хресченсен хǎватлǎ, малта тǎракан, техникǎпа пит лайǎх хĕçпǎшалланнǎ Хĕрлĕ çарĕ пур. Вǎл совет чиккисене хытǎ сыхласа тǎрать. Вǎл пирĕн çĕре туртса илес текене—кирек кама та, вǎл кирек те ǎçтан килсен те аркатмалах çапма хатĕр тǎрать.

Пирĕн çĕршывра хĕрарǎма нумай ĕмĕрсем хушши пынǎ пусмǎртан хǎтарнǎ, вǎл социалисǎмла обшчествǎн тулли правалǎ членĕ. Халǎхǎн культури пысǎккǎн ӳссе çĕкленчĕ, халǎха çутта кǎларас ĕç виçме çук ӳсрĕ. Халǎх массисем хушшинче талантсем пиншерĕн чечекленсе ӳссе пыраççĕ, вĕсене кивĕ строй пǎвса, лучǎркаса, хусса пурǎннǎ.

„Пурǎнма аваирах пулса тǎчĕ, йулташсем. Пурǎнма хǎвасларах пулса тǎчĕ“. Пирĕн çĕршывра стариксем те çамрǎкланса пыраççĕ. Кашни çамрǎк ǎрçын умĕнче, кашни çамрǎк хĕрарǎм умĕнче анлǎ та çутǎ çул уçǎ. Вĕсен ыранхи куншǎн хǎрамали çук. Пирĕн çĕршывра безработицǎ çук. Совет Союзĕн кашни гражданинĕн ĕçлев прави пур, ĕçлев правине Сталинла Конституци гарантилет. Çавǎнпа ĕнтĕ ĕçлеме хаваслǎ, ĕç ǎнса пырать, çавǎнпа ĕнтĕ пирĕн çĕршывра хулара та, йалта та ытарайми работниксем—стахановцǎсем тата ударниксем ӳссе пыраççĕ, вĕсем çӳлĕ ĕçтухǎçлǎхĕн образецĕсене кǎтартаççĕ.

Социалисǎмла аслǎ революци çак пысǎк çитĕнӳвĕсене кашнийĕх епĕр кашни кун, кашни утǎмра куçпа куратпǎр, туйатпǎр.

Çак пит пысǎк çитĕнӳсене кама пула тунǎ-ха, пирĕн Тǎван Çĕршывǎн ĕççыннийĕсене телейлĕ те хаваслǎ пурǎнǎç кам панǎ? Çак çĕнтерӳсене епĕр ку таринччен те, халĕ те массǎсен çулпуçĕнче Ленин—Сталин партийĕ тǎнипе тума пултарнǎ. Вǎл, Ленин—Сталин партийĕ, патша правительствине хирĕç, помещиксемпе капиталиссене хирĕç, пур тĕрлĕ оппортуниссене, ĕçхалǎхĕн интересĕсене сутакансене хирĕç кĕрешсе ӳссе çитĕннĕ тата çирĕпленнĕ. Большевиксен партийĕ ывǎнма пĕлмесĕр массǎсене кĕрешӳве чĕннĕ, вĕсене капиталисǎм стройне çавǎрса çапма организациленĕ. Ленинǎн чи лайǎх ученикĕ, халǎхсен çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, ĕççыннисен пур тĕрлĕ тǎшманĕсемпе ывǎнма пĕлмесĕр кĕрешсе, парти пирĕн çĕршывра социалисǎмла строй туса çирĕплетсе хучĕ.

Фашиссене тара кĕрĕшнĕ усалсем, троцкисла-бухаринла иудǎсем капиталисǎмла йĕркесене калл[illegible] туса хума, совет çĕршывĕнчи [illegible] çыннисене каллех пусмǎра кĕрт[illegible] ӳкерме ĕмĕтленсе, пирĕн çĕрш[illegible] Германийе тата Йапонийе су[illegible] пǎхнǎ. Анчах вĕсен ĕç тухма[illegible]. Çав предательсен, шпионсен бандине парти аркатса тǎкрĕ. Çав фашиссен йыттисем Совет Союзĕнчи халǎхсен телейлĕ те хаваслǎ пурнǎçне нихçан та пǎсаймĕç.

Ленин—Сталин партийĕн интересĕ—халǎха телейлĕ те ырǎ пурнǎçлǎ тǎвасси пулать, унǎн урǎх интерес çук. Рабочи класпа хресченсемшĕн хǎйне шеллемесĕр тата тӳрĕ ĕçлекен, хǎйĕн пĕтĕм вǎйне, опытне çак ĕçе паракан çын çеç коммунисла партин шанчǎклǎ ывǎлĕ пулса тǎрать. ССР Союзĕн Аслǎ Советне суйланǎ чухне халǎхǎн интересĕсемшĕн сǎмахпа çеç мар, ĕçпе тǎма пултаракан, ĕççыннисемшĕн пĕтĕм хǎвачĕпе ĕçлекен партири тата партире тǎман большевиксене кандидата тǎратас пулать.

Вǎл кандидатурǎсене халǎх пухусенче, пичетре те анлǎн сӳтсе йавĕ. Ку вǎл суйлавра тǎратакан кандидатсен ĕçĕсене кашни суйлавçǎ тĕрĕслеме, кашни суйлавçǎ—Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, халǎх ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тǎракан çыншǎн сасǎланине чǎннипех пĕлсе тǎма кирлĕ.

Совет Союзĕн кашни гражданинĕ клас тǎшманĕсем çинчен асра тыттǎр. Вĕсем, ĕççыннисене пакǎçсем тума, сǎтǎрлама, ССР Союзĕн Аслǎ Совечĕн суйлавĕсемпе усǎ курма пур майпа та тǎрǎшаççĕ. Клас тǎшманĕ уççǎн хирĕç тǎмаст. Вǎл сурǎх тирĕ тǎхǎнать, вǎл часчасах хǎйне совет влаçĕ майлǎ тǎракан çын пек кǎтартать. Вǎл политикǎлǎ лару-тǎрува чухласа, ǎнланса илме пĕлеймен суйлавçǎсене хǎй майлǎ çавǎрма тǎрǎшĕ. Тǎшман киревсĕр чейе мелсемпе ĕçлени çинчен кашни суйлавçǎ асра тыттǎр, тǎшмана палласа илме, питлеме, тǎрǎ шыв çине кǎларма пĕлтĕр.

ССР Союзĕн Аслǎ Совечĕн суйлавĕ—вǎл политикǎла пысǎк та пaха кампани. Аслǎ Совета хамǎрǎн Тǎван Çĕршывǎн чи тивĕçлĕ, чи шанчǎклǎ ывǎлĕсене, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тǎракансене, ĕç етемлĕхĕн ырлǎхĕшĕн, унǎн телейĕшĕн ĕçлекен коммунисла партишĕн пĕтĕм чĕререн тǎракансене суйламала.

М. МАНУИЛЬСКИЙ.

## Пĕтĕм Союзри йалхуçалǎх выставкине хатĕрленни

Октябрĕн пĕрремĕш вунǎкунлǎхĕнче Пĕтĕм Союзри йалхуçалǎх выставкинче пулма тивĕçлĕ кандидатсен хисепĕ 2.500 çитиччен ӳснĕ. Октябрĕн 10-мĕшне пĕтĕмпе 13.236 заявлени йĕркелесе панǎ, вǎл шутран 6.420 колхозсенчен. Малти вырǎнта Курск тата Черниговск облǎçĕсем пыраççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те колхозсенче, колхозсен таварлǎ фермисенчен тата йалхуçалǎхĕнчи малта пыракансемпе организатǎрсенчен тǎхǎрçĕре йахǎн заявлени йĕркелесе çитернĕ. (ТАСС).

*Аслă Совета суйлас умĕн*

## Татмăш йалсоветĕнче суйлав саккунне вĕренмеççĕ

ЕЛĔК. Татмăш йалсоветĕнче „ССР Союзĕн Аслă Совечĕ суйламалли Положенине" вĕренес ĕçе пайĕрхи куна çитсе те тĕплĕн йĕркелемен. Йалсоветра суйлав саккунне вĕренме пĕр хутчен пленум туса иртерчĕ те, урăх нимĕнех те туман. Йалсовет территорийĕнчи колхозсемпе йалсенче кружоксем организациленмен.

Вутлан колхозĕнче утă çулнă вăхăтра суйлав саккунне çинчен кăштах калаçкаланă та, лапланса ларнă. Колхозникĕсемпе колхозницăсене суйлав саккунĕ çинчен лайăх ăнлантарса паман. Колхоз председателĕ Семенов йулташ хăй те начар пĕлет. Колхозра суйлав саккунне вĕренмели кружок çук.

Татмăшри Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра та ĕçсем çавăн пекех. Суйлав саккунне вĕренес ĕçе йĕркелесси пирĕн ĕç мар, вулав çурт пуçлăхĕн—Быкăв йулташăн ĕçĕ,—тесе шутлаççĕ кунта колхоз руководителĕсем. Колхоз председателĕ Ананйев, учетчикĕ Йегоров тата бригадирсем: Куçмин, Йевдокимов, Уткин йулташсем хăйсем те суйлав йĕркисем çинчен пĕлмеççĕ.

Йалсоветăн кĕрекен Вутлан йалĕнче кĕçĕн вăтам шкул пур. Ку шкулта пĕтĕмпе 7 учитĕл. Анчах çав учителсем (уйрăмăнах Степанов, Иванов, Йемелйанов, Артемйева) халăха суйлав саккунне çинчен ăнлантарса парас ĕçрен айăкра пăрăнса çÿреççĕ.

Суйлав вăхăтĕнче халăх тăшманĕсем тĕрлĕ майсемпе сăтăрлă ĕçсем туma тăрăшĕç. Ку пурнăçăн те палла. Халăх тăшманĕсене уйрăмăнах хутла пĕлмен вата старикĕсемпе карчăксем хушшинче ытларах ĕçлеççĕ. Вĕсем хутла пĕлмен карчăксемпе старикĕсене хăйсен майлă çавăрасшăн тăрăшаççĕ.

Анчах Вутлан йалĕнче ситĕнниксене халĕ те вĕрентме тытăнман. Кунта хутла пĕлменнисем пĕтĕмпе 42 çын. Вĕсем валли кĕнекесем çителĕклĕ мар.

**Ф. Филиппов.**

## Студентсен пулăшăвĕ

Шупашкарти кооператив техникумĕнче вĕренекен студентсем „ССР Союзĕн Аслă Совечĕ суйламалли Положенине" кружокра вĕренеççĕ. Кашни статйине тĕплĕн паллашреç. Çакăн хыççăн, октябрĕн 12-мĕшĕнче—Аслă Совета суйламалли суйлав кампанийĕ пуçланнă кун, техникум çывăхĕнчи кил хуçи хĕрарăмĕсене суйлав саккунĕ паллаштарма тытăнчĕç. Комсомол комитечĕ комсомолĕçсемпе уйрăм студентсене техникум участникне кĕрекен урамсенчи кил хуçи хĕрарăмĕсене суйлав саккунне ăнлантарса пама çирĕплетнĕ.

Аслă Совета суйламали суйлав кампанине пулăшас майпа, студентсем канмали кунсенче колхозсене каяççĕ. Максимов йертсе пыракан бригада октябрĕн 12-мĕшĕнче Иштлей районĕнчи „Красный флот" колхозра пулса, суйлав саккуне вĕрентрĕ.

**Е. Йегоров.**

## 302 суйлавçăна пĕр учитĕл вĕрентет

ШĂХАСАН. Шуркасси йалсоветĕнче суйлав Положенине вĕренме кашни колхоз çумне учителсене çирĕплетнĕ. Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра 302 суйлавçăна пĕр учитĕл вĕрентет. Паллах, ку йыша пĕр учителĕн вĕрентме вăхăтарах—ăна пулăшас пулат. Анчах колхоз председателĕ—Й. Йеремейев пулăшас вырăнне, хăй суйлав саккунне вĕренессине хирĕç пырат.

Пожарпуç колхозĕн председателĕ кунĕн-çĕрĕн ĕçсе çÿрет. Суйлав саккуне вĕренмеççĕ. Кружокра, йачĕ пулттăр тенĕ пек, пĕр занйати çеç пулса иртнĕ.

**К. Йĕрмак.**

## Массăпа çыхăнман клуб

Канашри вакунсем йусакан заводра çамрăксем нумай ĕçлеççĕ. Вĕсем кану вăхăтне усăлă, культурăлă ирттересшĕн. Анчах ку ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе никам та тăрăшмаст. Заводра клуб пур. Ку та йĕркелĕ ĕçлемест. Сентябĕр уйăхĕнче пĕр спектаклĕ, пĕр вечăр тата çке-вăçĕ пуху ирттернĕ пусне, клубра нимĕнле ĕç те пулман. Йулашки вăхăтра киносем те кăтартма пăрахреç.

Клуба килекенсем шашкăсем, шахматсем ыйтаççĕ. Вĕсем çителĕклĕ мар. Антăрана май клуб пуçлăхĕнчен Михайлăвран пайан мĕн пулат, тесе ыйтсан: вăл кайса шашкăла выляр, тесе ответлет.

Пирĕн клубра кану вăхăтне савăнăçлăн ирттерес ĕçе организациleme пур кирлĕ условисем те çителĕклĕ. Хор кружокĕсем организацилеме пулат, т. ыт. те. Анчах клуб пуçлăхĕ Михайлов рабочисем хушшинчи массăлă ĕçе вăйлатни савăт тултарас ĕçре чи пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илменха. Клуб савăтран пачах уйрăлса кайнă. Партипе комсомол тата профсойуз организацисем те ку ĕç çине çиелтен кăна пăхаççĕ. Питех килĕшÿсĕр капла туни.

**В. Петров**

## Тăлăх канцеларi

Асхва йалсовет канцеларийĕ талăха тăрса йулнă. Пилĕк кун ытла йалсовет работникĕсене канцелярийĕнче курма çук. Октябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа йалсоветне ĕçпе пыни çынсем ахалех талăкĕ-талăкĕпе кĕтсе ларнă. Тĕрлĕ çĕртен йалсоветне телефон тăрăх вĕçĕмсĕр шăнкăртаттарни те усăсăр пулнă. Вĕсем чĕнсе те чĕнмен. Йалсовет председателĕ—Йаковлева (парти членĕ) района канашлăва илсе кинес тесе, райĕçтăвком Асхвана (Канашран километрта ларакан йала) йурийĕх самăл машин йарнă. Ку та пулăшмарĕ. Октябрĕн 8-мĕшĕнче парти райком секретарĕ Майоров Йаковлева райкомра бюро ларăвне докладпа килме хушрĕ. Унта та пымарĕ.

Вăл тăтăшах ĕçкĕре: хăш чухне „сăлтавпа", тепĕр чух—ним сăлтавсăрах. Йулашки вăхăтра пилĕк кун хушши умлă-хыçлă допризывниксене „ăсатрĕ". Пĕр кун ĕçет те, тепĕр кун „мухмăр" тесе, чирлесе выртăт. Колхозниксем 2—3 минутра туса памалли ĕçсемшĕнех Йаковлева йалсовет канцелярине пырасса икшер талăк хушши кĕтнĕ, темиçешер хут килсе кайса йăлăнна. Анчах вăл кашнинех: „канцеларине кайăр, вырăтăп ак", тесе суйса йанă. Акă, Канаш хулинче пурăнакан Александрова (вăл Асхва йалсовĕт пулнă) паспарт тутарма йалсоветĕнчен ĕнентерÿ илес тесе, Йаковлева шăпах вицĕ кун кĕтнĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем час-часах пулкалаççĕ. Йаковлевăн киревсĕр ĕçĕсене пĕле тăркачах, йалсовет председателĕнче татах нумай тытма шутлаççĕ-ши?

**И. Алтын-Баш.**

## Хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатăн столярнăй цехри рабочисем Аслă Октябрĕн уявне социалистла ăмăртура хутшăнса, хăйсен çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Акă Игнатйев йулташ Симоновпа ăмăртăва тухса нормăна кашни куллен 130 процент тултарма пулнă. Вĕсем халĕ иккĕшĕ те 200-шер процент ытла тултараççĕ. Октябрĕн 7-мĕшĕнче Игнатйев йулташ 219 процент, 8-мĕшĕнче—242 процент, Симонов 7-мĕшĕнче 157 процент, 8-мĕшĕнче 230 процент тултарнă.

Çавăн пекех Суханова, Уткин, йулташсем кулленех нормăна 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

**И. Николайев.**

## Чăваш республикĕнчи Осоавиахим организацин V-мĕш слесĕ хупăнчĕ

Октябрĕн 10-мĕшĕнче мандат комиссийĕ слес делегачĕ Волков çинчен пĕлтерчĕ. Волков Елĕк районĕнче Осоавиахим Совечĕн председателĕ пулса ĕçленĕ. Вăл халăх тăшманĕсемпе Йĕрмакова, Луминарскипе, Бзрандохинпа çыхăну тытнă. Вĕсемпе пĕрле ĕçкĕре пулнă. 1935 çулта Йĕрмаков хушнипе Волков Елĕкре осоавиахим организацин парадне туса иртернĕ. Унта Йĕрмаков хăй те пулнă. Çак праçникре иртерме Волков 700 тенкĕ укçа пухнă, унпа вăл пĕтĕмпех хăй усă курнă. Пулман ĕçсем çинчен рапăрт панă. Çаксемшĕн Йĕрмаков Волкова темиçе хут та премисем панă. Слес Волковăн мандатне кайăла турса илес, тесе йышăнчĕ. Елĕк районĕнчен килнĕ делегат Краснова Волковăн тăшманла ĕçĕсене ку таранччен пытарса пурăннă. Слес ăна та делегат хисепĕнчен кăларма йышăнчĕ.

Ирхи ларура 17 делегат тухса калаçрĕç. Тухса калаçакансем нумайĕшĕ суллахи кунсенче Çĕрпÿри лагерĕте пулнă тăшманла ирсĕр ĕçсене палартрĕç. Çĕрпÿ лагерĕ—тăшмансене пухăнса калаçусем туса иртермели вырăн пулнă. Кунта Йĕрмаковпа Луминарски хăйсен çемйисемпе пырса пурăна-пурăна кайнă. Вневойсковиксене вĕрентнĕ чухне бараксене йурийĕх таса мар тытнă. Пионерсен лагерĕнче ачасем чирленĕ. Çаксене парторг пулса ĕçленĕ Рйабчиков лайăх пĕлсе тăнă пулсан та, тăрă шыв çине кăларасшăн пулман,—тет слес делегачĕ Симиненко.

Шăхасан районĕнчен килнĕ делегатка Йефремова Осоавиахим организацийĕсене хĕрарăмсем йапăх хутшăнни çинчен каласа пачĕ. Осоавиахимăн районри советĕсенче ĕçлекенсем йалсене тухса ăнлантарса паманнине, уйрăмах Осоавиахим организацине хĕрарăмсене хутшăнтарма тăрăшманнине палăртрĕ вăл.

Октябрĕн 10 мĕшĕнче, каçхи ларура, 7 çын тухса калаçрĕç. Малтанах Çар комиссарĕ Илакин слес умне илчĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче халăх тăшманĕсен ĕçĕсемпе вĕсен ĕç меслечĕсем çинчен ăнлантарса пачĕ.

—Йĕрмаковсемпе Луминарскисем тата ытти халăх тăшманĕсем темиçе çул хушши Осоавиахим организацисенче йертсе пырас вырăна ĕçлесе чăрмантарса пынă. Вĕсем тăшманла, сăтăрла ĕçлекенсене премисем парса пынă, лайăх ĕçлекенсене ĕçрен кăларнă. Самокритикăна хĕссе пынă.

Çакăн хыççăн слес делегачĕсем: „Илакин йулташ, есĕр хăвăр Йĕрмаковпа Луминарскисен тăшманла ĕçĕсене палăртас тĕлĕшпе мĕнле кĕрешрĕ", тесе ыйтаççĕ. Илакин йулташ çак ыйтăва делегатсене кăмăла каймала ответлемерĕ. Çавăнпа та слес ун çинчен вăл ĕçлекен парторганизацинче сÿтсе-йавма хушса хăварчĕ.

Унтан слес делегачĕ Линков йулт. (Аероклуб) сăмах илет. Вăл аероклубăн сипленеленĕсем çинчен чăрăнса тăрат. „Çак куна ситичченех халăх тăшманĕсем—Йĕрмаковпа Луминарски тата вĕсене пулăшакан Бикетемиров (аероклуб начальникĕ), аероклубра хăйсен тăшманла ĕçĕсене туса пурăнна. Йĕрмаков Биктемирова сăтăрла ĕçсем туса пыма йатарласа аероклуба ĕçлеме йанă. Ăна начальник туса лартнă, Биктемиров пĕтĕмпех Йĕрмаков хушнă тăрăх ĕçлесе пынă. Биктемиров 1936 çулта аероклубăн бензинне пĕтернĕ. Биктемиров аероклубра дисциплинăна пăсса пынă, вăл нумайĕшне ĕçме вĕрентсе йанă.

Линков хыççăн Филиппов йулташ (Парти Обкомĕнчен) сăмах каларĕ. Вăл Осоавиахим организацинче халăх тăшманĕсен ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтересе пырас тĕлĕшпе малашнехи вăхăтра мĕнле ĕçлемели çинчен каласа пачĕ.

Кун хыççăн слес делегачĕсем Кожайова халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытнăшăн Осоавиахим членĕнчен кăларчĕç, делегат мандатне туртса илчĕ. Ун çинчен парти йĕнепе сÿтсе-йавма Улатăр райкомне пĕлтерчĕç. Рйабчикова Çĕрпÿ лагерĕнчи ситменлĕхсене вăхăтра палăртса пыманшăн слес президиумĕнчен кăларчĕç.

Октябрĕн 11 мĕшĕнче, каçхи ларура, слес Чăваш республикинчи Осоавиахимăн Тĕп Совет председателĕн ĕçĕсене туса пыракан Осипов йулташăн йулашки сăмахне илтерĕ.

Октябрĕн 12-мĕшĕнче суйлавсем пулчĕç. Осоавиахим Тĕп Советне пурĕ 41 член суйларĕç. Ревизи комиссине 11 çын суйлана. Осоавиахим Тĕп Совет членĕсен хушшинче Осипов Г. О (Шупашкар хули), Петров С. П. (Парти Обкомĕ), Филиппов И. Ф. (Парти Обкомĕ), Васильйев Т. В. (Тĕлĕçтăвком), Никифоров И. Н. (ПСЛКС Обкомĕ), т. ыт. те.

Пĕтĕм Союзри Осоавиахимăн III-мĕш слесне кайма Осипова, Смирнова (аероклуб) делегата суйларĕç. Çакăнпа слес хупăнчĕ.

Слесра пурĕ 109 делегат пулнă, вĕсенчен прениесре тухса калаçма 80 делегат çырăнна пулнă. Прениесре пурĕ 55 çын тухса калаçнă. Слес критикăпа самокритикăна анлăн сарнине иртрĕ.

**И. Данилов.**

## Консультаци пайĕ

ЫЙТУ: 1930 çулти февралĕн 20-мĕшĕнче Чăваш республикин Аслă Сучĕ пирĕн йалти Гр. Андрейова 10 çул тĕрмене хупмала, 5 çул хушши суйлав прависĕр хăвармала турĕ. 1934 çулта çывлăх начар пирки ăна тĕрмерен кăларчĕç. Вăл йала килчĕ те суйлав правине усă курма тытăнчĕ. Тĕрĕс-и ку?

**Тăхăр-Така, Трак р. Колхозник.**

ОТВЕТ: Сÿтсе асăннă çын суйлава хутшăнма пултараймаст, мĕншĕн тесен ăна суйлав прависĕр хăварнă срук тухман. Çавăнпа та ăна суйлавçăсен спискине кĕртни тĕрĕс мар. Ку вăл ССР Союзĕн суйлав саккунне пăсни пулат.

ЫЙТУ: Йалта чăлхасĕр, хăлха илтмен çынсем пур. 1927—1928 çулсенче пулса иртнĕ суйлавсенче вĕсене суйлав прависĕр хăварнă пулнă. Халĕ вĕсене суйлав прависĕр хăварни тĕрĕс-и?

ОТВЕТ: „ССР Союзĕн Аслă Совечне суйламалли Положенин" 2-мĕш статйи çапла калат:

„ССР Союзĕн Конституцийĕн 135 статйи тăрăх депутатсен суйлавĕ пурне те тивĕç: ССР Союзĕн 18 çул тултарнă пур гражданĕсен те, мĕнле расăпа национальнăç пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социаллă сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнле тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр,—**ăсран тухнисемпе тата суд айĕнпе суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшăнма та, ССР Союзĕн Аслă Совечне суйланма та права пур".**

Çапла, ăнтă кам суйлава хутшăнма тата суйланма пултарайманни çинчен пит те уççăн каланă. Хăлха илтмен йе куç курман йе калаçма пултарайман çынсене суйлавçăсен спискине кĕртмесни тĕрĕс мар. Суйлав саккунĕн 8-мĕш статйинче: **„суйлавçăсем хутла пĕлмен пирки, йе пÿ-çирм мĕнле те пулин ситменлĕх пур пирки хăйсен тĕллĕн суйлав бюллетенĕсене çырса тултарма пултарайманнисем суйлав бюллетенĕсене çырса тултармали пÿлĕме кирек хăш суйлавçа та суйлав бюллетенне çырса тултарма чĕнсе кĕртме пултараççĕ"** тенĕ.

## Хăмларан пысăк тупăш илчĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Суртлă хăмла лартса ÿстересси районри колхозсем 1934 çулта тытăннă. Чи малтанах „Волынский" хăмлана Шупашкар Ĕсмĕлĕнчи „Атăл", Хуракассинчи „Социализм" колхозсем лартса чĕртнĕ. Çак колхозсем „Волынский" хăмларан пысăк тупăш илме пуçланипе кура, 1935 çулта Акшикри „Паттăр", Туппай Ĕсмĕлĕнчи „Красная Чувашия", Анатри Кушмарари „Комсомолец" т. ыт. колхозсем те хăмла ĕрчетме тытăнчĕç.

Халĕ районра суртлă хăмла лартнă çĕр лаптăкĕ 147 гектара çитрĕ. Ку шутран 20 гектарне кăçал лартнă. Пуринчен ытла хăмла лартса ÿстересси районра Туппай Ĕсмĕлĕнчи „Красная Чувашия" колхоз тăрăшса ĕçлет. Вĕсем кăçал хăмла лартнă çĕр лаптăкне 10 гектара çитерчĕç. Ку 10 гектартан 6 гектарне кăçал çуркунне шпалер карнă. Шпалер карнă вырăнта хăмла уйрăмăнах пĕр гектартан 10-шар центнер тухрĕ, шпалер карман вырăнта гектартан 6-шар центнер çеç тухăç пулчĕ.

Колхозсем хăмла лартса тăвас ĕçе вĕренсе пынă çемĕн агротехника кăтартăвне ÿслениппе хăмларан çулран çулах пысăк тупăш илсе пыраççĕ. „Красная Чувашия" колхоз иртнĕ çулта 8 гектар хăмла вырăнĕ çинче 32 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ, кăçал 10 гектар çинчен 77 центнер хăмла илсе, ăна патшалăха сутса 75 пин тенкĕ укçа илчĕ. Çакăн пекех кăçал Анатри Кушмарари „Комсомолец" колхоз патшалăха 34 центнер хăмла сутса 31 пин тенкĕ, Шупашкар Ĕсмĕлĕнчи „Атăл" колхоз 36 центнер сутса 33 пин тенкĕ, Акшикри „Паттăр" колхоз 36 центнер хăмла сутса 36 пин тенкĕ укçа илчĕç.

Хăмла ĕрчетекен колхозсем кăçал ĕçкунĕ пусне тырă, çĕрулми т. ыт. продуктсем валеçнисĕр пусне укçан та чылай валеçеççĕ. Акшикри „Паттăр" колхозра кашни ĕçкунĕ çине 8-шер килограм тĕш тырă, 4-шер килограм çĕрулми валеçеççĕ, унпа пĕрлех тата 2-шер тенкĕ укçа тивет.

Суртлă хăмла ĕрчетни колхозсене хуçалăхне тĕреклетме, колхозниксене пуйан пурăнма пулăшат. Çавăнпа та çак хăмла ĕрчетессишĕн тăрăшса ĕçлекен колхозсем примĕрĕсе пур колхозсенче те суртлă хăмла ĕрчетме тытăнмала. Хăмла вăл пирĕн Чăваш республикин çерçи тухăçлă пулакан культура.

**В. Васильйев.**

## Выльăх-чĕрлĕхсене валли ăшă витесем çук

Кĕр кунĕсем çывхарса ситреç. Кĕçех сивĕ, çиллĕ çăмăрсем çума тытăнаççĕ. Çапла пулин те Елĕк районĕнчи Татмăш йалсоветне кĕрекен Вотлан, Вăрманкас, Татмăш колхозсенче выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленмеççĕ.

Вăрманкасри колхозра сысна ферми пур. Фермăра пĕтĕмпе 34 пуç сысна шутланат. Çак сыснасене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе колхозра нимĕн те туман. Сыснасем валли ăшă вите çук. Çавăн пирки вĕсем уйăх колхозниксен патĕнче сарайĕнчех пурăнаççĕ. Çавнашкалах 27 лаша ăшă вите туман пирки колхозниксен сарайĕсенче пурăнаççĕ. Колхозăн витесем тума кăçал вăй çитет, анчах витесем тăвасси çинчен лайăх шутласа пăхмаççĕ. Колхоз председателĕ Башмаков ĕçлес килмен майĕпе: „Кăçал вите тăваймастăр, вăй çитмест",—тесе ларат.

Вотлан колхозĕн сысна ферминче те хĕл каçарма хатĕрленмеççĕ. Унта пĕтĕмпе 109 пуç сысна. Вĕсене хĕл каçарма йатарласа тунă вите çук. Кив витине те йусамаççĕ. Ватере тĕттĕм, шăтăк-çурăксем тĕмен чухлех, йĕри тавра канав чавса çавăрман. Çавăн пиркин вăлла çăмăр сусанах витене шыв кĕрсе кайат. Вите йапăх пирки, колхозăн кăçал чылай сысна вилнĕ. Колхоз председателĕ Семйонов сыснасем вилессе пулин те, витене хатĕрлесе пама йусава тăрăшмаст.

Выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕç çине тÿнтерле пăхассине пĕтермелле. Халех хĕллене хатĕрлеме тытăнмала.

**Ф. Ф.**

## Колхоз хĕрĕсен такмакĕсем

Сырма хĕрне анас мар,
Сырма шывне ĕçес мар;
Кайа йулса пырас мар,
Колхоз йатне йарас мар.

Ушкăн кайăк йурласан
Вăрмана илем килет.
Стахановла ĕçлесен
Çамрăк чунăм хĕпĕртет.

Пăхăр пирĕн çинеле:
Йурла-йурла ĕçлетпĕр,
Стахановла ĕçлесе
Нумай тырпул илетпĕр.

Йĕлтăр-йĕлтăр йăс такан—
Лайăх лаша урине.
Йĕлтăр-йĕлтăр сăран атă—
Стахановçă урине.

Чийе йывăç ен хартрăм,
Капăршăн мар, сырлишĕн.
Ен савнине йуратрăм
Стахановçă пулнишĕн.

Шурă кĕпе çĕлетрĕм
Ăшă купра тăхăнма.
Хам пĕвĕме ÿстертĕм
Çĕн пурнăçра пурăнма.

**А. Григорйев** „Правда" колхоз (Йетĕрне р-нĕ) членĕ.

## Ăратлă сыснасем ĕрчетеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шупашкар Ĕсмĕлри „Атăл" колхозра сысна фермине 1930 çулта пĕр ама сыснапа йĕркелесе йачĕç.

1930 çулран пуçласа 1934 çула çитнĕ çĕре мĕн пурĕ те 27 сысна шутне çеç çитнĕ. Çакă тăватă çул хушшинче сыснасем патĕнче нимĕн йĕрки те пулман, сыснасене пăхакан колхозниксем выльăх-чĕрлĕх ĕçне курссенче вĕренмен, час-часах вĕсем ĕçкунĕсем сахал тивет тесе, сыснасене пăхмасăрах пăраха-пăраха кайнă.

Çакнашкал çитменлĕхсене кура, колхоз 1934 çулта колхозник Вaрушин Иван йулташа икĕ уйăхлă выльăх-чĕрлĕх ĕçне вĕренмели район курсне йарса вĕрентсе кăларчĕ, сысна ферми çумне бригадир туса çирĕплетрĕ. И. Варушин курсран вĕренсе тухнăранпа ăнтĕ пĕр таталмасăр сысна фермине 4-мĕш çул вăйне хурса ĕçлет.

„Малтанах çулсенче фермăра пăрăнти ăратсăр сыснасем пулнă, вĕсене вăл „Белая-английская" тĕсен йăхлă-ăрăна чуптарса çултан çул метизациллес пычĕ. Колхоз сыснасем валли 1934 çулта 8 амалăх ăшă та çутă вите туса пачĕ. Пайанхи куна колхозăн сысна фермийĕ районта лайăх фермăсен ретĕнче шутланса тăрат, бригадир И. Варушин та бригадăртан куçса фермă пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Халĕ пурĕ фермăра 7 çын ĕçлеççĕ, вĕсенчен икĕ хĕрарăм. Фермăра ĕçлекен колхозниксене пĕр пек уйăрса икĕ бригада туса вĕсен çумне 18-шар ама сыснасем çирĕплетсе тунă. Пĕррĕмĕш бригадăра Шилов Михаил, иккĕмĕшĕнче Варушин Арсенти йулташсем бригадирсем пулса ĕçлеççĕ. Икĕ бригади те пĕрпĕринпе ăмăртăва тухса сыснасене питех те йуратса пăхаççĕ. Пĕррĕмĕш бригадă кăçалхи çул 9 ама сыснасене пĕр хут çурлаттарса 99 çăвăр илчĕ.

Фермăри сыснасене пăхас ĕçре зоотехникăн вĕрентĕвĕсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Утăпа пĕрчĕлĕ тырра, çĕрулми-кăшманлăсене те тиллĕ халлĕн çитереççĕ. Кашни-кунах пĕçерсе сыснасем валли ăшă апат хатĕрлеççĕ, каткасене йÿçĕтсе лартса, кунне çакнашкал апатсемпе вицĕ хутчен çитереççĕ. Апата çирĕп норма тăрăх параççĕ. Сыснасен шăмшаккисене çирĕплетме апатпа пĕрле: тăвар, кĕл, шăмă çăнăхĕ, çунтарнă извёстка, т. ыт. вĕрлесе улшăнтарса, кунне вашни сыснасене 30—40 грам, çамрăккисене 20—25 грам тарантчен ситерсе пыраççĕ. Çакăнпа сыснасем апат нормине Варушин апат еднецийĕ тăрăх шутласа тăват.

Çамрăк çурасем çурални 10 кун иртсен, варпитти чирĕсемпе чирлесрен, хĕрлесе кайиччен типĕтнĕ сĕлĕ кĕрпе пек вĕтетсе типĕ халлĕн çитерсе усă кураççĕ. Сыснасене кашни кун тăракан пулĕмĕсенчен кăларса, уйăм пÿлĕмсене апатлантараççĕ. Сыснасем апат çинĕ хушăра вĕсен вырăнĕнчи тислĕксене хырса тасатса, çĕнĕрен мраш улăмĕ сарса тăраççĕ. Кашни апат памассерен апат валашисене çуса тасатса, вĕри шывсемпе çăваççĕ.

17 метис ама сысна 9 ама икшер хут, 8 ама пĕрер хут çурларĕç. „Верба", „Бйабина" йатлă амасем икшер хут çурласа мĕн пурĕ 22-шер çурасем туса пачĕç, çапла вара мĕн пурĕ 238 çура, вăтам шутпа пĕр ама пуçне 14-шар çура илчĕç.

Патшалăх планĕ тăрăх, 1938 çулăн йанварĕн 1-мĕшне валли 140 сысна, вĕсенчен 30 ама çăвăр тăвакансемĕ пулмала. Ку шута фермă 100 процентпех пурнăçларĕ. Çавăн пекех патшалăха аш-какай парас ĕçе те 1937 çулшăн аван тултарса пыраççĕ.

Халăх вăхăтра фермăра 36 ама сыснасем, вĕсенчен 15-шĕ кĕркунне 1936 çулта, çуртçĕршывран кÿрсе килнисем шутланаççĕ. Халĕ тата икkĕмĕш хут çурлакан ама сыснасем 17 пур. Çакăнта асăннă ама сыснасене валли фермă пуçлăхĕ тăрăшнипе иртнĕ çуркунне колхоз 12 амалăх ăшă та çутă вите туса пачĕ. Ама сыснасене чуптарма фермăра йатарласа икĕ аçа усраççĕ, вĕсем ăратлă „белая-английская" тĕсенчен çавăрнă, çап-çутă тĕслĕ йăлтăр пек, мĕн пите те паха аçасем, „белая-английская" тĕсенкескерсем. Пĕр-пĕр ама сысна çурлас вăхăт пĕр кун каяс çес йулсан, ама тăракан пÿлĕмри улăмсене тасатса кĕл шывĕпе лайăх çуса илсе, çĕнĕ улăм сарса тасаççĕ. Сысна çура тунă чух, пĕр çын уйрăм питечех çуçасене çуласа тăрат, шуп таса тутăрпа çурасене пĕчченĕн тасатса, кăвапине хырăмĕнчен 10 сантиметр тăршшĕ хăварса дезинфекцилесе çиппе çыхса кăтса кассан илсе, таса карçинсем çине хураççĕ, амăшĕнчен уйрăм тытаççĕ. Сысна çурасан икĕ сехет иртсен каллех пÿлĕмри уламсене тасатса, тепĕр хут кĕл шывĕпе лайăх çуса тухса, çĕнĕ çемçе улăм сарса, ама сыснана хăйне те пур çĕртен те ăшă шывпа лайăх çуса илсе тирпейлесе, тинех вара çурасене ĕмĕртме амăш патне йараççĕ.

Çапла ăнтĕ сыснасем патĕнче ĕçлекен колхозниксем сысна фермине районта чи примерлă тăвассишĕн, унтан кашни çулах ытларах тупăш илессишĕн вирлĕн кĕрешеççĕ.

Иртнĕ çулта кĕркунне районта йалхуçалăх выставки пулса иртрĕ, унта Варушин Иван сысна амипе çурисене тăратнăшăн 50 тенкĕ укçан преми илчĕ. Кăçалхи çул каллех выставкăна тăратма пайанлăсен парса хунă.

Çитес çул пĕтĕм Союзĕпе Мускав хулинче пулса иртекен йалхуçалăх выставкине тăратма пĕрремĕш бригадăн (бригадирĕ Шилов Михаил) сыснисене хатĕрлеме шутлаççĕ.

Çакнашкал пысăк çитĕнÿсем туни фермă пуçлăхĕ Варушин йулташ фермăран пĕр таталмасăр, тăрăшса ĕçленĕрен килчĕ.

**Зоотехник—П. Васильйев.**

## Ваттисем çамрăксенчен йулмаççĕ

ИШЛЕЙ. Чылай колхозсем чукунçул строительствинче стахановла вунăкуллăха хутшăнса, пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухнă хыççăн, пысăк хăвăртлăхсемпе ĕçлеме тытăнчĕç. Акă Йанаш Лепетер, Очаккаси йалсоветсене кĕрекен колхозсем ĕçсене илер. Лепетерти колхоз 350 кубла метр тăпра чавса кăларассине 7 кун хушшинче тултарчĕ. „Шупуç" колхозĕнчен пынă 66 çулхи карчăк Ирина Сергеева, 63 çулхи Йефим Иванов, „Комбайн" колхозран пынă 61 çулхи Йегор Миронов çамрăксемпе пĕр тан ĕçлесе пычĕç. Вĕсем ĕç нормине ытлашшипех тултарса ĕçлерĕç.

Колхозниксем хĕрÿлĕ ĕç хыççăн, кану вăхăтне културлă ирттереççĕ. „Хачăк" колхоз членĕсем хуткупăс илсе пынă. Кăçхине колхоз ачисемпе хĕрĕсем ташласа, йурласа савăнаççĕ.

**Гер. Щербаков.**

## Йĕркесĕр ĕçлекен столовай

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительстин 3-мĕш участкинче рабочисем валли столовай усăнă. Анчах вăл питех те йĕркесĕр ĕçлет. Унта тасалăх çине çаврăнса пăхмаççĕ. Йулнă апатсене тепĕр кунне çĕнĕрен пĕçерсе çĕре йарса хутăштараççĕ.

Çăкăр вицсе панă çĕрте тĕрĕс мар тараçапа усă кураççĕ. Степанов (çăкăр вицекен) пĕр пурнипе тĕртсе те 150 грам туртакан çăкăр 200 грам туртакан пулат.

Строительствăри рабочисем чукунçула Октябрĕн уйăхĕ тĕлне тухса пĕтерессишĕн кĕрешнĕ вăхăтра сууту-илу работникĕсене çакнашкал ĕçлени питех те килĕшÿсĕр. Вăхăт ăнтĕ мăшлăтсе ĕçлеме пăрахма.

**С. Мартйанов.**

# Йалхуçалăх рабфакĕнче тăшмансен тымарĕсене кăкласа пĕтермен

Л. И. Иванов чăвашсен йалхуçалăх рабфакне 1935 çулта килсе кĕрет.

Иванова, вăл аван вĕреннине кура, 1936 вĕренÿ çулĕ пĕтес умĕн профком председательне суйлаççĕ. Иванов ĕçлеме пуçлать. Анчах вăл часах хăйне аслă пуçлăх вырăнче туйса илет. Вара хăй ирĕкĕпе „ирĕклĕ" ĕçсем тума тытăнать. 1936—37 вĕренÿ çулĕнче П. Семйонăв, Б. Андрейĕв троцкиссене кооптаци йĕркипе профкома кĕртет. Семйонăвпа Андрейĕв троцкиссем профкомри ответлă вырăнсене йышăнса сăтăрлă ĕçсем тума пуçлаççĕ.

Ивановпа Захарăв, Семйонăвпа Андрейĕв „пуçлăхсем" хăйсене хирĕç çăвар уçма паман. Вĕсене критиклеме хăйакансене вĕсем рабфакран кăларса йарассипе хăратнă.

Кайрантарах, профком самокритикăпа тепле хĕснĕ пулин те, Семйонăвпа Андрейĕв троцкиссен ĕçĕ тăрă шыв çине тухрĕ. Анчах Иванов куйта та хăйĕн ирсĕр тусĕсене хÿтĕлеме тытăнчĕ. Студентсен пухувĕнче вăл тăшмансен адвокачĕ пулса:—Андрейĕвпа Семйонăв граждан вăрçи историне пĕлмеççĕ, политика йенчен çирĕп мар, çавăнпа та вĕсем халăх тăшманĕсене ырланинчен пимĕн тĕлĕнмели те çук,—тесе сÿпĕлтетрĕ.

Семйонăвпа Андрейĕва комсомолран та, рабфакран та кăларса сирпĕтнĕ йентĕ. Анчах вĕсене хÿтĕлекен, тăшмансен сывăх тусĕ Иванов шăппăн çеç пытанса йулчĕ.

Иванов рабфак директăрĕ Н. Йурйĕв умĕнче йăпăлтатма йуратать. Çавăнпа пулĕ йентĕ, ырă кăмăллă директăр Иванова стипенди ÿстерсе памала тунă, Ана канмали çурта каймали путĕвкă парса премиленĕ.

Йурйĕв директăр подхалимсене йалапах ырă кăмăлпа пăхать. Рабфак йубилейĕнче вăл Семйонăвпа Андрейĕв троцкиссене, тăшмансен адвокатне Иа. Захарăва премиленĕ.

Рабфакăн пуçламĕш комсомол организацийĕ Иванова, унăн пĕтĕм ирсĕр ĕçĕсемшĕн, комсомолтан кăларса ывăтас, çавăн пекех рабфакран та кăларас ыйту лартрĕ. Анчах комсомол организацийĕн пухăвне Йурйĕв пырса ларни пĕтĕм ĕçе урăх майлă çаврăнчĕ. Комсомолĕссен пухăвĕ Йурйĕв сăмахĕнчен тухаймарĕ. Çапла вара Л. Иванов пайанхи кун та комсомолрах тăрать.

Йалхуçалăх рабфакĕнчи комсомол организацийĕ Иванов ĕçне тепĕр хут тĕпрен пăхса тухмала. Иванова халех комсомолтан, çавăн пекех рабфакран та кăларса çапмала. Совет шкулĕнче троцкиссемпе вĕсене хÿтĕлекенсем валĵи вырăн çук.

С. Владимиров.

# Разумовăн ирсĕр ĕçĕсене витсе пурăнакансем çинчен

Канаш районĕнчи Шаккăл йалсовет пуçлăхĕ чылай вăхăт хушши тăшманла ĕç туса пурăнать. Вăл районри работниксем умĕнче йăпăлтатнипе сĕес делегачĕ пулса Мускава та кайрĕ. Райком секретарĕ пулнă М. Григорйĕв, троцкисла шпионсемпе çыхăнса кайнăскер, хÿтленипе йалсовет пуçлăхĕ Разумăв иртĕнсе кайса, тăшманла ĕçсем тăва пуçларĕ. Вăл финанс политикине пăсрĕ. Налук политикине пăсрĕ. Йалти граждансене йури хирĕçтерсе йарас шутпа ĕçлесе Разумăв çак çул хушшинче 30—35 çынна не саккунсăр торги туса çурт-йĕрне, выĵăх-чĕрлĕхне сута-сута пĕтерет. Райком секретарне хăй патне хăнана чĕнсе ĕçтерет. Лешĕ вара автомобилпех Разумăв утарне пыл лĕçме пырса тăнă. Хăйне тăрă шыв çине туртса кăларасран шиклене Разумăв хăй тавра „Ман йалсовет членĕсем" тесе Мартынăв Ивана (колхозран пăта вăрланăшăн кăларнăскере), Латышова, Çемйонăва (колхозниксене çĕрле чулпа персе çĕмĕрсе çÿрекен хулигана) пĕрлештернĕ.

Çав асăннă çынсем пухусенче, пленумсенче „Пирĕн председатель лайăх ĕçлет. Хаçат çине çыракансем ăна ахаль кураймасăр çыраççĕ"—тесе вĕçĕ-хĕррисĕр калаçнă.

Çапла пухусенче йăпăлтатнисене Разумăв чунтан йуратать. Самокритикăна нихçанкинчен те хĕссе лартнă. Хаçат çине пĕр-пĕр статйа пичетленсе тухсан, Разумăв çыракана вăрçса çÿренĕ, ăна хăйне лектеретĕп, тесе çÿрет. Йалсовет пуçлăхĕ иртĕнсе, тăшманла ĕçленĕ çĕртех, райĕçтăвком пуçлăхĕ Федотăв Антон:

— Вот молодец. Финпланпа Шаккăл малта пырать,—тесе пленумсенче, ларусенче ырланă. Çав вăхăтра граждансен ĕнисем чи йÿнĕ хакпа спекуĵантсен аллине торги йачĕпе лекнĕ. Трофимăв А. ĕнине Шандаров спекуĵант йÿнĕ хакпа илет те, хаклăрах хакпа Йумансарти Утқина сутать. Ун çинчен Канаш райпрокурорĕ Рыкăв Разумăва кăтартулă хут çырать, анчах Разумăв вăл хут çине çаврăнса та пăхмасть, Шандароза ответ тыттармасть, мĕншĕн тесен вĕсем иккĕш ĕçсе-çинĕ. Шандаров 1921 ç. кулаксен восстанийĕнче пулнă.

Çакăн пек киревсĕр ĕçсем халăх тăшманĕсене пуçĕсене çĕклеме май параççĕ.

Йалти комсомол организаци те Разумăвăн тăшманла ĕçне пытарса пурăнать. Мĕншĕн тесен комсомол комитет секретарĕ вырăнĕнче халăх тăшманĕ Кошкин Ковсг. ĕçлет. Вăл иртнĕ çулсенче патшалăхăн 4000 т. займне çухатса судпа айăпланнă.

Çак асăннă киревсĕр ĕçсем çинчен районри работниксем: прокурор—Рыкăв, райком—Майорăв, райĕçтăвком—Федотăв, райхаçат редактăрĕ—Петухов пĕлеççĕ, анчах тăшманла ĕçе тăрă шыв çине кăларас ĕçре суккăрланса кайнă. Йалти корреспондентсем çитменлĕхсем çинчен пĕрре çеç çырман, прокурор Рыкăв патĕнче материал та нумай, анчах ĕçсене тĕрĕслесе тухас чухне, тăшман ĕçне палăртас чухне, Шаккăлти колхоз ĕçĕнчи киревсĕрлĕхсене, Разумăвăн тăшманла ĕçне пытарса тăраççĕ.

А. П.

# Татах Гаврилăв çинчен

Йелчĕк районĕнчи çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ М. Гаврилăв, парти ретне ăнсăртран кĕнĕскер, чăтма çук ирсĕр, тăшманла ĕçсем туса пурăннă. Колхоз пурлăхĕсене çаратса, фермăсенчи выĵăхсене вĕлерсе пĕтерсе, колхозниксен хушшинче хирĕçÿ кăларасшĕн пулнă. Вăл ку тĕлĕшпе, районри чылай колхозсене хăйпе пĕр шухăшлă çынсене лартса, сăтăрла ĕçсем тума ĕлкĕрнĕ. Районри ăратла выĵăхсем тата лашасем валĵи паспăртсем тунăшăн пухăнакан укçана тăватă пин тенкĕ хăйĕн кăсйине чикнĕ. Кун çинчен тĕрĕслеме следстви органне иртнĕ çулах панă пулнă, анчах М. Гаврилăвăн тăшманла ĕçĕ çинчен асăннă органсем чунсăрланса пăхнă, ку таранччен те тăрă шыв çине кăларман.

Вăл та çитмест. Йелчĕк р-чи колхозсенчи паççикасен ĕçĕсене лайăхлатма тесе, патшалăх 750 тенкĕ укçа панă. Çак укçана паççикă пур колхозсене уйăрса парас вырăнне, М. Гаврилăв каллех хăйĕн кăсйине чикме май тупать. Патрекелĕнчи „Осоавиахим" колхозăн 1152 тенкĕ укçипе хăй усă курать.

Тăшмана сутăннă М. Гаврилăв, кулак ывăлĕ пулнăскер, парти билечĕпе витĕнсе, пирĕн районри колхозсен пурнăçне йапăхлатассипе сахал мар тăшманла ĕçсем тунă. Акă тата тепĕр тĕслĕх. Тутаркас районĕнчен Йелчĕке куçса чух, подиомнăй илместĕп тесе, Аслă Йелчĕкри Ленин йачĕпе тăракан колхоз грузовикĕпе усă курать. Кун хыççăн подиомнăй та илет, колхоза та укçа тÿлемест. Çапла вăл икĕ хут подиомнăй илме май тупать.

Çĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксене воспитани парассипе ĕçлес вырăнне, М. Гаврилăв ĕçкĕпе иртĕнме вĕрентнĕ. Ахеĵтен мар йентĕ, Ш. Шчипцов агрономпа шанчăксăр Артушкин, М. Гаврилăв хушнипе, икĕ хутчен çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕн кабинетĕнче ĕçкĕ тунă.

Халăх тăшманĕ Суворовски пирĕн района хăйĕн çынниие Сомкина йанă. Вăл М. Гаврилăвпа тачăн çыхăну тытса пурăнна. Кунтан М. Гаврилăв кам пулни аванах курăнать йентĕ.

К. Воробйов.

# ЧУКУНÇУЛ КИЛЕТ

Тарасăв бригадир реĵсăсем хывма йĕркелесе сарнă шпалсем çинче тăрать. Таврăра пуçтă, мăлатук сасси йанрать. Вăхăтран вăхăта вакунсем çинчен реĵсăсем пушатнă çĕртен савăнăçлă ĕç кĕввине аса илтерекен сасăсем илтĕнеççĕ.

Реĵсăсене Чижов инженер мастерĕсемпе хывма хатĕрленнĕ çĕрте хĕрÿлĕ ĕç пырать. Савченкопа Хлутйĕв тата Крыловпа Пушков йулташсем шпалсене васкавлăн йĕркелесе сараççĕ. Шпалсем çине реĵсăсем хумали вырăнсене вăхăтра, тĕрĕс тата виçелĕ паллă туса пынипе савăнакан Пушков пуçне çĕклемесĕр ĕçлет.

Тарасăв бригадинче стахановла йухăм аталанса, пысăк ответлăхпа ĕçленĕ никĕс çинче çуралнă. Вăл пур ĕçе те пысăк ăсталăхпа ĕçлеме вĕренсе пынă, чукунçула вăхăтра туса, вăхăтра ĕçе кĕртесси — пĕтĕм чăваш халăхĕн ĕçĕ пулса тăнине ăнланса илнĕ. Ку бригадă членĕсем хăйсем стахановла ĕçленипе кашни кун темиçе реĵсă та пулин ытларах сарни орденлă Чăваш республикин чиксе çĕклени, унăн хуçалăхне хăвăрттăн малала йама, чăваш халăхĕн пуйанлăхне ÿстерме условисем тăвас çулпа çирĕп утăм туни пулни çинчен лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа вĕсем хăйсен ĕçне вырнаçулă, пысăк тÿрĕлĕхпе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Бригадă кашни кунхи нормăна 120 процентран кайа мар тултарса пырать.

Тимофейĕв, Акапов тата ытти йулташсем сарнă реĵсăсене йĕркелесе çип çапнă пек пĕр тÿрĕ линни туса пыраççĕ. Саĵниковпа Шунулин бригадисенчи çынсем вăрăм линисене шпалсем çумне костыĵсемпе çирĕплетеççĕ. Ку ĕçсене тĕрĕс те пысăк ăсталăхпа туни кирлĕ. Болтсемпе костыĵсене реĵсăсем мĕнле вырăнта пулмалине, хăш йеннеле авăнса вырт малине шута илкĕ тăрăх çапмала. Унсăрăн çирĕплетнĕ реĵсăсене чукунçул хывмали тăпра тăрăх малала шутарнă чухнех болтсем татăлма, реĵсăсем авăнма пултараççĕ.

Кунта кунашкал çитменлĕхсем пулас çукки пысăк шанчăкра. Чукунçул строительствинче нумай çулсем хушши Чижов инженер мастерĕпе реĵсăсем хывассине кăтартулăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Ĕç хĕрлĕ йалав орденне илме тивĕçлĕ пулнă Бубчиков бригадăсене кĕске вăхăтрах ĕçлеме вĕрентсе çитерсе, стахановла хăвăртлăхсем çине куçарчĕ. Саĵниковпа Шунулин бригадисенчи рабочисем халĕ реĵсăсене шпалсем çумне çирĕплетме хăйсем тĕллĕн те пултараççĕ. Çирĕплетме пултараççĕ çеç мар, вĕсем ку ĕçре кунран кун çĕнĕ тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Саĵников бригадир виçĕ сехет хушшинче 525 штук костыĵ çапас вырăнне 1016 штук çапса, Шунулин йулташ 1005 штук çапса, костыĵсем çапас ĕçе икĕ хут хăвăртлама май пуррине ĕçпе çирĕплетрĕç. Халĕ вĕсем бригадăри çынсене пурне те хăйсем пек ĕçлеме вĕрентсе, тунă ÿсĕмсене йаланлăхах çирĕплетсе хăвармала тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Кунта реĵсăсем хывакан çĕрти рабочисем çеç мар, çывăхри участоксенчен линийе хывнине курма пынă колхозниксем те нумай. Вĕсем те хăйсем хастарлăн ĕçлени вĕçленсе куçа курăнакан пысăк та хамăра малашне тата та хăвăртăн ÿсмĕ кирлĕ чукунçул линийĕ вырнаçса пынине курса савăнаççĕ. Кашни тулли кăмăлпа хĕпĕртет.

Анчах пайăна илсен, чукунçул хывас ĕç кирлĕ пек пулса пымасть-ха. Чукунçул хывас ĕçе çырмасем урлă кĕперсем туса çитермени, çырмасене тăпра тултарманни чăрмантарса тăрать.

М. Т.

Çĕмĕрле Комбинатĕнчи стаханăвçă Д. Пахомов йулташ.
(Комбинатри ÿкерчĕк).

# Художниксен сойузĕнче „пурте лăпкă"

Халăх тăшманĕсем—И. Кузнецов, А. Золотăв тата М. Федăрăв, хăйсем никçан та художник пулман пулсан та, Чăваш Совет художниксен Сойузĕн правленинче ларнă, чăваш живописне тĕрлĕ майпа сăтăрласа пурăннă.

1935 çулта чăваш художникĕсем тунă картинсен выставкине, Шупашкарта пулнă хыççăн, крайĕçтăвком йышăннă тăрăх, Горьки хулине куçарчĕç. Выставкă пĕтсен, картинсене кайала пуçтарса килесси шĕн никам та тăрăшман. Вунпĕр уйăх ытла тивĕççĕр сапаланса выртнă хыççăн, Токсин, хăй Горькине кайсан, май уйăвĕ вăхăтĕнче картинсене урама кăларса çакма хушнă. Картинсем вара çăмăр айĕнче, хĕвел çинче тăрса, хăйсен илемлĕхне çухатнă. Мускавра (унта помешчени те панăччĕ) чăваш художниксен выставкине уçассине те пĕтерсе лартрĕç.

Тăшмансем, хăйсен мĕн пур ĕçĕпе чăваш халăхĕн искусствине ÿсме чăрмантарса пынă. Хăйсен ирсĕр ĕçĕсене палăртасшăн мар пулса, правительствăн уйрăм руководителĕсене тĕрлĕ майпа йурама тăрăшнă. Вĕсен портречĕсене скуĵптăрласа тума 9 пин тенкĕ укçа пĕтернĕ. Çапла йăпăлти пĕркенчĕкпе витĕнсе, художниксем хушшинче самокритикăна вăйпа хĕссе пырса, мĕн пур ĕçе хăйсен йевĕрлĕ тунă, чăваш живописне буржуалă националисăм çулĕпе йама тăрăшнă.

Апла пулсан та, çав тăшмансем пайан кунченех чăваш совет художникĕсен Сойузĕнче тата унăн правлевин членĕнче тăраççĕ.

Мĕншĕн художниксен Сойузĕн правленийĕн вăхăтлăх председателĕ Н. Сверчков халăх тăшманĕсен ирсĕрĕçĕсем çинчен художниксен пухувĕнче сÿтсе-йавассине вăраха тăсса пырать-ха? Мĕншĕн тесен, Н. Сверчков художниксен масси хăйне те тăрă шыв çине кăларасран шикленет. Вăл хăй те пайанччен халăх тăшманĕсемпе çыхăнса пурăннă.

Н. Сверчкова, Çĕпĕрте, художествă техникумĕн директăрĕ пулнă вăхăтра, хăйĕн аппаратĕнче пĕр шпион-белогвардейцăна пытарса пурăннăшăн 1932 çулта партирен кăларнă. Унтан Чăваш республикине килсен те, вăл халăх тăшманĕсемпе туслă пурăннă. Буржуалă националиссене мухтаса картинăсем çырнă. Сăмахран, „Автономи илнине пĕлтерни" картинăра Елмене тĕп фигурă туса кăтартнă т. ыт. те.

Халăх тăшманĕсемпе çыхăнса пурăннă Йу. Зайцĕвпа Тагайĕв—Сурбан т. ыт. çинчен те ыйтăва татăклăн лартмала. Вĕсем Кузнецовпа тата Золотăвпа тачă çыхăнса пурăннă, вĕсем хушнă тăрăх чăваш халăхĕн пурнăçне пăсса кăтартакан картинăсем çырнă.

Йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă йăпăлти—аферис Йу. Зайцĕв художествăна хирĕçле тата националисăм сăрĕпе сăрланнă картинăсемсĕр пуçне нимĕн те паман. Вăл йулашки çулсенче контрактăпа шучĕпе икĕ çул хушши уйăхне 450 тенкĕ илсе пурăнать пулсан та, пурĕ те халăх тăшманĕсен—Шупуççыннипе П. Хусанкайăн портречĕсене кăна сăрлана.

Халăх тăшманĕсем—Кузнецовпа Золотăв çамрăк художниксене хăйсен агенчĕсенчен —Зайцĕвран, Сверчковран тата Тагайĕв—Сурбанран вĕренме сĕннĕ. Лешсем вара хăйсем патне консуĵтаци илме пыракан çамрăксене йурăхсăр тĕрĕс мар канашлусем парса сăтăрлана.

Ăна çак пĕр факт та лайăх çирĕплетсе парат. Çамрăк художник Богаткин йулташ хăйĕн картинĕсене художниксен Сойузне илсе пырсан, Сверчков; Зайцĕв, Тагайĕв „консуĵтантсем" тÿрех çапла ответлене:

— Санăн сÿжетлĕ картинăсем çырма талант çук, афишăсем çырма пултаран,—тенĕ. Талантлă çамрăк художникĕн ĕçлес кăмăлне çапса хуçасшăн пулнă, анчах ĕç тухман. Богаткинăн пултарулăхĕ халĕ пĕтĕм Сойузĕпе паллă, вăл халăх пултарулăх искусствин пĕтĕм Сойуари выставкинче пĕрремĕш премий илнĕ.

Чăваш Совет художникĕсен йузĕн правленийĕ Сойузра çамрăксемпе кăна мар, С... тăракан çамрăк художник... ĕçлемест, вĕсене искусств... сирсе пырат. Сойузра т... члентан 13 çын кăна Ок... воĵуцийĕ 20 çул тулта... организациленекен выста... шăнаççĕ.

Искусствă ĕçне чăрм... тăшмансене тĕпĕ-йĕрĕпех пăрахса, Чăваш Совет х...сен Сойузне чăн-чăн п... организацийĕ туса хума...

Художник А. Мйаç...

# Хаçат-журнал сарассине тивĕçлипе организацилемеле

Советсен çĕнĕ суйлавне хатĕрлен-мĕнле пани пе интереслеимест. нĕ май хаçат-журнал пысăк вырăн йышăнса тăмала. Чылай вырăнти почтă уйрăмĕсенче ĕçлекен работниксем, почтаĵйонсем çакна ăнланса илнĕ, вĕсем хаçат-журнал сарас ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Йетĕрне ПСК(б)П райкомĕ çак ĕçе партипе комсомол тата йалти активсене, стена хаçат ретактăрĕсене йавăçтарнă. Районти почтă уйрăмĕ хаçат-журнал сарассипе почтаĵйонсене тата стена хаçат редактăрĕсене пухса семинарсем туса иртернĕ. Çавăнпа та йентĕ Йетĕрне районĕ 1937 çулхи çурçулăхра республикăра 2 мĕш вырăна тухрĕ. Шупашкар хули те çулталăк планне вăхăтра тултарчĕ.

Çав вăхăтрах Шăхасан районĕ хаçат-журнал сарассине çителĕклĕ организацилемен, чăтма çук ÿрĕк-сÿрĕк ĕçлесе пырать. Кунта почтă уйрăмĕн пуçлăхĕ Чернов почтаĵйонсене ĕçре вĕрентсе пымасть, вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслессипе тата ĕçкунĕсем

Шăхасан районĕ уйрăмăнах начар ĕçлени курăнать. „Для начинающих читать" Йетĕрне районĕнче 39 екземпĵар, Шăхасан—30 екземпĵар, „Колхозный бригадир" журнала Йетĕрне—66, Шăхасан—30 екземпĵар, „Колхозиая многотиражка" хаçата Йетĕрне—32, Шăхасан—2 екземпĵар, „Крестьянка" журнала Йетĕрне—41, Шăхасан—17 екземпĵар çеç илсе тăрать. Ытти хаçат-журналсем пирки те çавнашкалах ĕç начар тăрать.

Çентабĕр уйăхĕнче Елĕк районĕ лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Кунта Чăваш Коммунĕ"—720 екземпĵар, „Колхозник йалавĕ"—796, „Пионер сасси"—1459 екземпĵар сарнă.

Йетĕре районĕнчи Тури Сăнарти „Çĕнĕ пурнăç" колхозри почтаĵйон Вожаров Степан кăçалхипе 7-мĕш çул йентĕ почтаĵйон пулса ĕçлет. Вăл чăнахах та хаçат-журнал саракан агитатăр пулса тăнă. Вожаров хăй çÿрекен участкăра кашни килех хаçат-журнал çырăнса панă. Кунсăр пуçне, вăл бригадăри политвулавçă тата стена хаçачĕн чи активлă йалкорĕ. Вăл колхозниксем умĕнче хăйĕн авторитетне чылайах хăпартнă.

Акă камран пример илсе ĕçлемеле!

Халĕ пирĕн чи пысăк задачă: çĕнĕ суйлава хатĕрленнĕ май партипе комсомол, профсойуз тата йалти активсене йавăçтарса хаçат-журнал сарас ĕçе вăйлатасси. Кашни колхозрах пĕр правлени членне хаçат-журнал сарас ĕçре ответлă çын тумала. Ку ĕçре районти почтă уйрăмĕн пуçлăхĕпе райĕçтăвкомăн тата райкомăн пулăшу парса, вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăмала.

Октабĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртăва тухса кашни колхозник, йединоличник килĕсене хаçат-журналлă тăвассишĕн кĕрешмеле.

Й. Оçипов.

# Реĵсăсене хывнă çĕрте

УХМАН (хамăр корр.). Кĕçĕн Çавал шывĕ хĕрринчи айлăмри тарăн çырма патĕнче лавсем, çынсен ушкăнĕсем хускалма тытăнчĕç. Вĕсем Канаш, Вăрмар, Йĕпреç районĕсенчи колхозниксем, 95-мĕш километăрти çырма урлă реĵсăсем хывма труба çине тăпра тултараççĕ. Лавсем тăпра тĕми урлă каçса кайнă майĕх тăпра купи ÿссе, сарăлса пырать.

Çырма тулса çитсен реĵсăсем хывма пуçăнмала. Çавăнпа Пуĵахин, Саĵников, Шунулин бригадисенчи рабочисем те васкасах ĕçлеççĕ. Вĕсем реĵсăсене Чижов мастерĕсемпе хывма хатĕрлеççĕ.

Ку çырмари труба çине тăпра тултарассине кĕтсе реĵсăсем хывнă çĕрти рабочисем сакăр кун иртернĕ. Виççĕмĕш участкă (начаĵникĕ Захарйонок) трубана çентабĕрĕн 10-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерес вырăнне октабĕрĕн 2-мĕшне çитичченчасни труба çине тăпра тултарассине кайа хăварчĕ. Пиллĕкĕмĕш участкă (начаĵникĕ Дашков) тимсĕр, çаврăнусăр ĕçленине пула тăпра тултарасси те вăхăтра пурнăçа кĕмерĕ. Труба çине тăпра тултарас ĕçе октабĕрĕн 6-мĕшĕ тĕлне пĕтерес вырăнне 8-мĕшĕччен чăснă.

Ĕç вăрăма кайни çинчен сăмах пуçлансанах Дашков ĕç вăйĕ çитменни çинчен халап çапма тытăнать. Чăнахах та ĕç вăйĕ çителĕксĕр. Канаш, Вăрмар, уйрăмăнах Йĕпреç, Йелчĕк, Шăмăршă районĕсем ÿрĕк-сÿрĕк ĕçленĕ пирки стахановла вунăкунлăхра вăл районсенчен ĕçлеме пыракансен хисепĕ ÿсес вырăнне, чакса пынă. Вунăкунлăхăн пĕрремĕш кунĕнче участкăра çураннисем 1831 çын, лашалисем 721 çын ĕçленĕ пулсан, çиччĕмĕш кунĕнче çураннисем 1145 çын, лашалисем 457 çын çеç ĕçленĕ. Ĕç вăйĕ чакса пынин айăпĕ участкă руководителĕсем çине те хыттăн тивет. Ку сăмахсем тĕрĕссине участкăн йулашки вăхăтри ĕçĕсене тишкерсе тухни те лайăх уçса парать.

Акă фактăсем: Канаш районĕнчи Доронин йачĕпе тăракан, „Шмидт" тата „Хĕрлĕ çар" колхозсем ĕçе лайăх организациленине, ăмăртупа стахановла йухăма вăйлатсах пынине пула хăйсен обйазательствисене вăхăтра ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ. Кусен ĕç опычĕсене ытти колхозсенчен пынă бригадăсем хушшинче сарма май пулман-и вара? Паллах, пулнă. Анчах Дашков, унăн кăмăлне пула ытти работниксем те, колхозниксем хушшинче ĕçлессине кирлĕ ĕç вырăнне хуман. Вĕсем колхозниксем çине бÿрократла пăхнă. Ĕçлеме пыракансене ĕç çинчен ăнлантарса парас вырăнне, пăрăнса çÿренĕ. Йĕпреç районĕнчен пынă колхозниксене чуллă вырăна алтма лумсем кирлĕ пулнă. Донских маçтăр лумсем çукки çине персе икĕ-виçĕ кун хушши памасăр тăнă. Склада кайса тĕрĕслесен, лумсем ытлашшипех пурри палăрнă. Çапла Донских йурийех ĕçлеме чăрмантарасшăн тăрăшни тăрă шыв çине тухрĕ. Анчах прораб Дашков кун пирки нимĕн те тумасть-ха. Каçхи сменăсенче ĕçлеме çутă парас ĕçе организацилемен пирки колхозниксем икĕ каç ĕçлемесĕр тăнă. Кунашкал тĕслĕхсем темĕн чухлех илсе кăтартма пулать.

Ĕçе йĕркелес йенĕпе çеç мар, механизăмсемпе те начар усă кураççĕ. Автомашинă ахаĵ ларать. Екскаватăр 7 кун хушшинче икĕ кун ĕçлемесĕр тăнă.

Кăтартнă фактăсем Дашков икĕпитлĕ çын пулни, пустуй сăмах ваклантипе витĕнсе пурăнни çинчен калаççĕ. Дашков икĕпитлĕ çын пулни октабĕрĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ радиоперекличкă хыççăн тата та уççăн палăрчĕ. Вăл перекличкăра 95-мĕш километрти труба çине тăпра тултарса çитернĕ, октабĕрĕн 8-мĕшĕнче тепĕр çур сехет ĕçленĕ хыççăн реĵсăсем хывмала тăватпăр тесе, антăхса кайсах ĕнентерчĕ. Анчах мĕнле пулчĕ-ха тепĕр кунне? Реĵсăсем хывнă çĕрте ĕçлекен бригадăсем реĵсăсене çирĕплетсе тунă 640 метр тăршшĕ линине малала шутарма виçĕ кĕтеслĕ тимĕрсене трактăрсемпе турттарма хатĕр. Болтсене çирĕплетсе çитернĕ. Кĕç-вĕç малала ыткăнас пек хашкаса тăракан паравоз та реĵсăсене малала тĕкме сигнал парасса кĕтет. Анчах труба çине тăпра купаласа çитерменни тытать. Çакна пула реĵсăсене хывассине чарса тăма тиврĕ. Ирех васкаса ĕçе тухнă реĵсăсем хывакан бригадăсен 11 сехет иртиччен тăмала пулчĕ. Çакăн хыççăн çеç 640 метр тăршшĕ линийе паравоз хастаррăн малала шутарма тытăнчĕ. Бригадăсем, рабочисем те савăнсах ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем пайан 1280 метр хушши реĵсăсем хыврĕç. Ыран виçĕ километр, тепĕр кунне тата та ытларах хывма пулаççĕ. Вĕсен ĕмĕчĕ пысăк шанчăкра. Вăл шанчăк Пуĵахин, Тарасăв, Шунулин бригадисем кулленхи нормăна 125 процентран кайа мар тултарса ĕçлеме пултарнинче. Вĕсем часах Кĕçĕн Çавал шывĕ урлă хывнă кĕпер патне çитĕç.

Анчах 3-мĕш участкă ку кĕпер патĕнче те тăпра тултарса çитермен. Кунта тăпра тултарас ĕçе хăвăртлас вырăнне виççĕмĕш участкăри работниксем: халĕ 95-мĕш километăрти труба çине тăпра тултарса çитертĕмĕр, малала ĕç йĕркелĕн кайать, тесе халапласçĕ. Ку сăмахсене калакансем умра тата та пысăк, ответлă ĕçсем тăнине курмаççĕ пулас. Кĕçĕн Çавал кĕперĕ патне тăпра тултарса çитермен, Çавалăн сулахай йенче лини хывмали вырăна алтса пĕтермен, 86—81-мĕш километрсенчи трубасене туса çитермен, вăл трубасем çине тăпра тултармала,—çак ĕçсене 5—6 кун хушшинче пурнăçа кĕртмесен реĵсăсем хывассине татах чарса тăма тивет. Апла ан пултăр тесен, пиллĕкĕмĕш участкăн трубасене тăвассине икĕ-виçĕ хут хăвăртламала, виççĕмĕш участкăн çак икĕ-виçĕ кун хушшинче Кĕçĕн Çавал шывĕ урлă хывнă кĕпер патĕнче тăпра тултарса çитермеле. Кусене пурнăçа кĕртме сăмах ваклани мар, строительствăри работниксем, Шăхасан, Йелчĕк, Шăмăршă, Йĕпреç, Вăрнар районĕсем мĕшлĕтетсе ĕçлес йăлана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерни кирлĕ.

М. Титов.

# Михайлов чăрмантарать

Йершерти Тельман йачĕпе тăракан колхозăн чукунçул строительствинче 300 кубла метр тăпра чавса турттармала. Ку тарана çитиччен пĕтĕмпе 260 кубла метр çеç чавса турттарнă. Мĕншĕн-ха плана йерипен пурнăçа кĕртсе пыраççĕ? Куншăн чи пирвайах колхоз председателĕ Михайлăв айăплă. Вăл строительствăна ĕçлеме кайакан колхозниксене апат-çимĕççем тата лашасем валĵи фураж йурийех çителĕклĕ парса йамасть. Колхозниксене 10—12 кун ĕçленĕ хыççăн кайала килмеле тăвать.

Чернышев.

## Совет Сойузĕпе Турци суту-илӳ догăвăрĕ тунă

Октăберĕн 8-мĕшĕнче Анкара хулинче ССР Сойузĕпе Турци хушшинче суту-илӳ договăрĕ тунă. Ку договăра тăвас ыйту тăрăх темиçе уйăх хушши калаçу пынă. Совет Сойузĕпе Турци хушшинчи суту-илӳ договăрĕ тата Совет Сойузĕпе Турци хушшинчи суту-илӳпе расчет килĕшĕвĕ çак икĕ государствă хушшинче комерческий (суту-илӳ) çыхăнăвĕн правалă никĕсĕ пулнă.

Çĕнĕ договăр ССР Сойузĕпе Турци хушшинчи виççĕмĕш договăр пулса тăрать. Совет Сойузĕпе Турци хушшинчи пĕррĕмĕш суту-илӳ договăрне 1927 çулти март уйăхĕнче çырса алă пуснă. Ку договăр ку таранччен Совет Сойузĕпе Турци хушшинче аталанса пынă суту-илӳ ĕçĕн йĕркине майлаштарнă, Совет Сойузĕпе Турци хушшинчи суту-илӳ ĕçне туса пыма ССР Сойузĕн Турцири торгпред...и ĕçĕсене, çак икĕ Государствăн суту-илӳ организацисен правасене, таварturттарас, тиесе çу...ĕпе çӳрес ыйтусемпе çыхăнса тă...кан ĕçсене пăхса тухса татса ...нă.

Суту-илӳн çак договăрĕн срукĕ тухнă май, Турци çĕнĕ договăр тăвас ыйту тăрăх 1930 çулта калаçу пуçланă та, 1931 çулти мартăн 16-мĕшĕнче, Мускавра çав иккĕмĕш договăр çине алă пуснă. Совет Сойузĕпе Турци хушшинчи суту-илӳн иккĕмĕш договăрĕ çак икĕ çĕршыв хушшинчи суту-илӳ ĕçне вăйлатас ыйтусене татса панă. 1931 çулхи договăр тăрăх, суту-илӳ режимĕ çинчен темиçе килĕшӳ тунă пулнă. Унчухнехи суту-илӳ килĕшĕвĕсен тĕп принципĕсем ССР Сойузĕ Турцирен мĕн ...чухлĕ тавар кӳрсе килнĕ, Турци те ...ăн чухлĕ çеç ССР Сойузĕнчен ... илмеле туни пулнă.

...çулта тунă суту-илӳ дого...та унпа çыхăнса тăракан ...н срукĕ 1937 çулти йан...ĕшĕнче тухнă. Советпа ...авитĕлствисем çав дого...хăтлăха чăсма килĕшнĕ, ...-илӳ договăрĕ тăвасси ...ланă калаçăва вĕçне çи...улнă.

...карă хулинче тунă Со...ци хушшинчи суту-илӳ ...çĕнĕ договăрĕ, 1931 ...овăрпа танаштарсан, до...йуридически тата суту-...политикăлă статйисене чы...улăштарнă, лайăхлатнă. Правам пысăкланаççĕ. Çак договăрпа ...пĕрлех суту-илӳпе расчет килĕшĕвĕ ССР Сойузĕпе Турци тулти суту-илӳ оборочĕ тăрăх пĕр-пĕринпе мĕнле расчет тумалисене кăтартнă. Ку килĕшӳ çак икĕ çĕршыв хушшинчи суту-илӳ расчочĕсен техникине нумай çăмăллатать.

(ТАСС).

## Фашиссемпе фашиссене хирĕççисем хушшинчи çапăçу

ЛОНДОН, октăберĕн 11-мĕш. Октăберĕн 10-мĕшĕнче Ливерпулре фашис ушкăнĕсен пухувĕнче (ăна полици хуралланă) фашиссен лидерĕ Мосли тухса сăмах каламала пулнă. Фашисăма хирĕççисен пысăк ушкăнĕнче пулнисем фашиссене чулпа персе пĕтернĕ. Мосли пуç шăмми ваннипе ăнран тухнă. Фашиссемпе фашиссене хирĕççисем хушшинчи çапăçура 10 çын аманнă. 15 çынна арĕсленĕ.

(ТАСС).

Испани халăхĕн фашисăма хирĕçле кĕрешĕвĕ.

**Укерчĕк çинче:** Республикăлă Испанин Халăха çутта кăларас ĕç министăрĕ Хесус Эрнандес (коммунист) Листер дивизин бойецĕсем патĕнче тухса калать.

(Сойузфото).

## Фашисла Италири çуклăх тата выçлăх

Фашисла Италире ĕççыннисен йышлă массисем калама çук хĕнхур тӳссе пурăнаççĕ.

Италире официаллă пĕлтерне тăрăх, халăх çимĕççемпе усă курни çапла чакса пырать:

1930 çултанпа 1936 çула çити кашни пĕр çынна çулталăкра çинĕх мĕн чухлĕ тивни 142,5 килограмран 118,6 килограма йулнă, çĕрулми мĕн чухлĕ тивни 35,4 килограмран 29,6 килограма йулнă, сахăр—9,1 килограмран 6,7 килограма йулнă т. ыт. те. Фруктăсем çини те (фруктăсем Италире йаланах çăкăртан йӳнĕ пулнă) чакнă—40,9 килограмран 29,7 килограма йулнă. Çимели ...и кирлĕ продуктăсен хакĕсем пĕрмайах ӳссе пыраççĕ.

Италире ыйткаласа çӳрекенсем пит нумай. Италири кирек хăш хулара та лайăх тумланнă çын ирĕккĕн пĕр вунă минут та ...ма пултараймасть,—ун патне темиçе çын ал тăсаççĕ. Ĕç укçи пит сахал тӳлеççĕ, темĕн чухлĕ халăх, çамрăк тата çулланнă рабочисем тата пысăк квалификацилĕ интеллигентсем ĕç шыраççĕ, анчах тупаймаççĕ.

Çапла ĕççыннисен пурнăçĕ калама çук йухăнса пынă вăхăтра, фашисла Италире вăрçă промышлĕнĕçĕ пĕччĕнех аталанса пырать. Çĕршывăн тĕп пуйанлăхĕсене пĕтĕмпех вăл çисе йарать.

Фашисла Итали хаљ Испанире вăрçă вăрçать, çав вăхăтрах тата пысăкрах вăрçа хатĕрленет. Çавăнпа Италире фашиссем халăхăн пĕтĕм сĕткенне вăрçă валљи сăрхăнтарса илеççĕ. Тупăсен тата крейсĕрсен хисепĕ ӳссе пырать, çавна май халăх çука йулни тата хăвăртрах ӳссе, çăкăр пайокĕ чакса пырать, ачасем çураласси чакать, вилни ӳссе пырать. Талантлă та чĕрĕ халăха фашиссем вилсе пĕтсе пырасси патне илсе пыраççĕ.

(ТАСС).

## Левенфишпа Ботвинник хушшинчи шахмăт матчĕ

Матчăн тăваттăмĕш партинче малтанхи ултă ходсем лăп та шайах Левенфишпа Ботвинник иккĕмĕш партинче выљăнă чухнехи дебӳт пекех пулнă.

Левенфиш çиччĕмĕш ходран пуçласа пачах çĕнĕле выљать. Ботвинник пешкăсемпе центра йышăвса илет. Левенфиш икĕ слонпа та фланга çирĕплетме тытăнать. Вунпиллĕкĕмĕш ходра Ботвинник пĕр пешкăна парать. Слона, конја тата ферзĕсене улăштарнă хыççăн темиçе ходран, парти ендшпиле куçать. Кунта тĕрлĕ сăнлă слонсем кĕрешӳ лăпкă пыни çинчен каласçĕ. Çирĕм виççĕмĕш ходра партнĕрсем никам та çĕнтерейменнипе килĕшеççĕ. Октăберĕн 12-мĕшĕнче выљаман. Октăберĕн 13-мĕшĕнче 6 сехет те 30 минутра матчăн пилĕкĕмĕш парти пуçлавнă. Шуррисемпе Левенфиш выљать.

## ХРОНИКĂ

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарне Бубнов А. С. йулташа, Совет влаçĕн оргăнĕсем йенчен пысăк пулăшу панă пулин те хăйĕн задачисене пурнăça кĕртейменшĕн тата çутта кăларас ĕçе пĕрмайах туса çитерейменшĕн ĕçрен кăларма йышăннă.

* * *

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Тӳркин П. А. йулташа, Ленинград Облаçĕн Ĕçтăвакан Комитет председателĕнчен хăтарса, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарне çирĕплетнĕ.

* * *

ССР Сойузĕн Осоавиахим Тĕп Совечĕн президиумĕ Осоавиахимăн Пĕтĕм Сойузри виççĕмĕш сйесне 1938 çулхи мартăн 25-мĕшĕнче пухма йышăннă.

(ТАСС).

## Китайри вăрçă

Шанхай фронтĕнче Веңцзаопон каналĕн кăнтăр хĕрĕнче тата Чапей районĕнче (Шанхайăн çурçĕр кварталĕ) улшăнса тăракан çитĕнӳпе хайар çапăçусем пыраççĕ. Октăберĕн 11-мĕшĕнче Китай çарĕсен, иртнĕ темиçе кун хушшинче Веңцзаопон каналĕнчен канал хĕрринех куçса пынă Йапонин пысăк чаçĕсене хĕссе кăлармă май пулнă. Йапонцăсем кунта хăйсен позицисене канал тăрăх ансăр вырăнта çеç, вĕлермели йапаласемпе усă курса анчах тытса тăраççĕ.

Çурçĕр Китайра Бейбин—Хаңкоуск чукунçул тăрăхĕнче çапăçакан Йапони çарĕсем Шичзйачжуон йатлă пысăк узĕллă станцине йышăннă. Тйаңцзин—Пукоуск чукунçул районĕнче Китай çарĕсен йĕрĕ Дачжоу хулинчен кăнтăрала 20 километртан иртсе пырать.

Октăберĕн 9-мĕш, 10 мĕш тата 11-мĕш кунĕсенче Йапони самољочĕсем Кантон çине, вăл шутрах Сун Йат-сенăн паллă университечĕ çине çĕнĕрен темиçе хутченех бомбăсем пăрахнă. Нумай чухăнсен пӳрчĕсене çĕмĕрнĕ. Вилнисем хушшинче ваттисемпе ачасем нумай.

* * *

НАНКИН, октăберĕн 10-мĕш. 1911 çулта пулнă Китай революцин уйавĕ майĕпе Чан Кай Ши Нанкинра радио тăрăх, Китай халăхĕ Йапони агрессине хирĕç кĕрешнине çутатса сăмах каланă.

Кĕрешӳн усси çинчен каласа, Чан Кай Ши: „Епĕр агрессăра хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешнин вĕçĕ пирĕн наци историнче çĕнĕ ерă уçмала. Пирĕн пĕрмайах нацилĕ пĕрлĕхе тата хăватлăха вăйлатма тăрăшмала. Хăйĕн умĕнче пурнăç йе вилĕм ыйтăвĕ тăнă чухне, пирĕн пĕтĕм нацин пĕрле кĕрешмеле. Наци интересĕсем, татăклă çĕнтерӳ тăвас пулсан, пире кашнинех çирĕп дисциплинăлă пулма хушаççĕ,—тенĕ.

ЛОНДОН, октăберĕн 11-мĕш (ТАСС). Лондонри Китай посољстви йулашки иртнĕ виçĕ кун хушшинче темиçе заявлени пичетлетерсе кăларнă. Вăл заявленисенче Йапони çарĕсем Шанхай фронтĕнче вĕлерекен йапаласемпе усă курни çинчен кăтартса параççĕ.

## Массăлă йурăсен конкурсĕ

Чăваш Совет писателĕсен Сойузĕ массăлă йурăсен текстне çырма организациленĕ конкурс октăберĕн 5-мĕшĕнче пĕтрĕ.

Конкурса мĕн пурĕ 30 автăртан 36 йурă тексчĕ килчĕ. Конкурс вăхăче кĕске пулнă пулин те (пĕр уйăх) массăлă йурăсем çырас ĕçе автăрсем, пуринчен ытла çамрăк автăрсем активлăн хутшăннине палăртас пулать. Пичетре палăрнă сăвăççемсĕр пуçне автăрсен хушшинче учителсем (Ваçкин, Меценатов), вĕренекенсем (Давыдов), красноармейцăсем (Г. Николайев—пограничник) тата ытгисем те пулчĕç.

Конкурс жӳрийĕ (Елкер, Уйăп М., Ĕçхĕл) октăберĕн 9-мĕшĕнче йурă тексчĕсене тĕплĕн пăхса тухнă хыççăн çапла йышăнчĕ:

1. Пĕррĕмĕш премине тивĕçлĕ паха текстсем пулман пирки ăна никама та парас мар.
2. Иккĕмĕш преми (200-шер тенкĕ) çак текстсемшĕн парас: 1) „Аслă Сталина“ (Н. Йанкасăн), 2) „Хĕвелĕмĕр Сталин“ (Ив. Иваникăн).
3. Виççĕмĕш преми (100 тенкĕ) „Улма чăпар ут“ текстшăн Ив. Ивника парас. Писателсен правленийĕ октăберĕн 11-мĕшĕнче жӳри йышăнувне çирĕплетрĕ.

Правлени уйрăмăнах поетсем Елкер, Ĕçхĕл т. ыт. те конкурса хутшăнманни çине кăтартса, вĕсене малашне массăлă йурăсем çырас ĕçрте активлăн ĕçлеме хушрĕ.

Массăлă йурăсем çырас ĕç активлăн тин çеç пуçланчĕ-ха. Ку ĕçе пур поетсен те, композитăрсен те çине тăрсах тытăнмала. Епĕр, автăрсем, халиччен йурăсем çырас тĕлĕшпе питех те йапăх ĕçленĕ. Малашне композитăрсемпе тата çывăхрах тăрса аслă Совет çĕршывĕн телейлĕ çыннисене тивĕçлĕ, вĕсен тулли кăмăлне хаваслантаракан, çĕклентерекен паха хĕрӳлĕ йурăсем çырмала.

Кунта çакна та калас пулать. Нумайĕшĕ халхи конкурса хутшăнна автăрсенчен массăлă йурăсене мĕнле çырмалине, музыкă çине хурастесен текст мĕнле пулмалине шута илмен. Нумай сăвăсене конкурс условисемпе килĕшмен пирки пăрахăçламала пулчĕ. Час-часах пирĕн çавĕч, хĕрӳлĕ йурăсем шăранса тухас вырăнне, ĕçкĕ йуррисем йеверлĕ тухаççĕ. Йе илемсĕр, вайсăр, сӳрĕк пулаççĕ. Кусене пурне те малали ĕçре шута илмеле пирĕн.

Массăлă йурăсем çырас ĕç чи ответлă ĕç, чи хисеплĕ паха ĕç. Автăрсен хушшинче паха йурăсем тăвас тĕлĕшпе пуçланнă ăмăрту малала тата хĕрӳлĕрех çĕклевсе каймала. Амăрту пуçланнă, ăмăрту пырать.

Уйăп Мишши.

## Тӳрлетни

Сойуз Советне тата Националљнăççен Советне суйламали суйлав округĕсем çинчен ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленийе вырăсларан чăвашла куçарса пичетленĕ чух, редакци айăпĕпе Канаш суйлав округĕнчен Йелчĕк районĕ тухса ӳкнĕ. Çавăнпа Сойуз Советне суйламали Канаш суйлав округне хăш районсем кĕни çинчен тепĕр хут пичетлетпĕр:

„КАНАШ суйлав округĕ—№ 365 (центр—Канаш хули).

Районсем: Канаш, Кӳславкка, Вăрмар, Тăвай, Йелчĕк, Шăхасан тата Трак районĕнчи йалсоветсем: Супар, Алманч, Турхан Упи, Тусай, Кушар, Метикасси, Уйкас Йунтапз, Тĕрер, Упи тата Йанкас“.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав Комиссии составне çирĕплетесси çинчен“ йышăннă постановленин 2-мĕш абзацне çапла вуламала:

„Тĕп Суйлав Комиссин председателĕ Москатов Петр Георгийевич—Професçилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп советĕнчен“.

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ


„Чăвашлеспромăн“ Улатăрти автошкулĕ

Октăберĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен

УЙРĂМ ГРАЖДĂНСЕНЧЕН ТАТА КОЛХОЗСЕМ, СОВХОЗСЕМ, ПРЕДПРИЙАТИСЕМ ПАНĂ КОМАНДИРОВКĂСЕМ ТĂРĂХ

Шофĕрсен курсне

ЗАЙАВЛЕНИСЕМ ЙЫШĂНАТЬ

Шофĕрсен курсне арçынсене тата хĕрарăмсене, 18 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран, 4 çултан кайа мар вĕреннисене, сывлăх тĕлĕшĕпе пур йенчен те йурăхлисене суйласа илеççĕ.

Автошкул вĕрентес ĕçсене çеç туса пырать. Вĕренмели срук 5 уйăх. Вĕрентнĕшĕн 1100 тенкĕ илеççĕ, Стипенди, хватер укçи тата ытти расхутсене шкул тӳлемест.

Зайавлени çумне çак документсем кирлĕ:

1) Ĕç стажне кăтартакан хутсем.
2) Йулашки вырăнта мĕнле ĕçлени çинчен характеристикă. 3) çичĕ фотокартăчкă (çара пуçăн ӳкерни). Командировкă тăрăх пулсан çаксене хушмала: 4) Организацирен илнĕ командировкă хучĕ, 5). Вĕрентнĕшĕн 1100 тенкĕ тӳлеме пулнă обйазательствă.

Пашпăрт йе метрикă хутне (суралнн çинчен) сывлăха пăхтарма пырсан (комиççире) кăтартмала.

Курса вĕренме йышăннисен октăберĕн 30-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре Улатăрти Поликлиникăна (Комиссариат урамĕ) сывлăха пăхтарма пымала. Сывлăха пăхтарса хут илме 10 тенкĕ тăрать.

Зайавленисене Улатăрта йышăнаççĕ.
Адрес: г. Алатырь, ул. Кирова, 36, с 9 до 17 часов.
АДМИНИСТРАЦИЯ.


## Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем

## Америкă агрессине сивлет

Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен президенчĕ Рузвелт Чикаго хулинче сăмах тухса каланă. Америкă президенчĕ Рузвелт тĕнчери лару-тăру çинчен сăмах тухса калани политикăла пысăк вырăнта тăрать. Рузвелт сăмахне Америкăра та, йутçĕршывсенче те çапла хак панă. Рузвелт хăйĕн сăмахĕнче тĕнчери политикăла лару-тăру йăвăрланнă çемĕн йăвăрланса пыни çинчен каланă.

Рузвелт сăмахĕн тĕп шухăшĕ — вăл агрессине татăклăн, хайаррăн сивлени, агрессăрсем тăвакан саккунсăр, киревсĕр ĕçсене питлени пулать. Рузвелт сăмахĕнче агрессăрсене йатпа каламан пулин те, çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен президенчĕ агресси йутçĕршывсен территорине кĕрсе кайни, мирлă халăха нимĕн хĕрхенмесĕр вĕлерсе пĕтерни, пиратла ĕçсем çинчен каланă чухне мĕнле патшалăхсене шута илни пуриншĕн те уççăн палăрса тăрать. Америкăри хаçат-журналсем Рузвелт сăмахĕ çинчен çырнă чухне, Йапонин агрессивлă ĕçĕсене тӳрех кăтартса параççĕ. Ку çеç мар, Америкă хаçачĕсемпе журналĕсем Йапонипе пĕрле Германине, Италине агрессăрсен, мирлă саманана пăсакансен, халăхсен лăпкă пурнăçне пĕтерекенсен шутне кĕртеççĕ.

Рузвелт агрессине сивлени ăнсăртран пулман. Америкăра пурăнакан халăхсем нумайĕшĕ вăрçăна курайманççĕ, ăна тӳсейменççĕ, çавăнпа та Рузвелт каланă сăмах Америкă халăхĕ вăрçăна хирĕç тăнă шухăша палăртать. Мĕншĕн тесен, Америкă халăхĕ мирлă саманан фашисла тăшманĕсене хирĕç тарăхнине темиçе хутчен те уççăнах кăтартнă.

Рузвелт агрессине хирĕç кĕрешме чĕнни, паллах, миршăн, халăхсен лăпкă пурнăçĕшĕн кĕрешекен патшалăхсене мораллĕ пулăшу пани пулать. Кунпа пĕрлех Рузвелт сăмахĕнче тата урăх хаклă сĕнӳсем те пур. Рузвелт хăйĕн сăмахĕнче агрессине сăмахпа çеç сивлени сахал, ăна хирĕç вăйпа кĕрешме кирли çинчен каланă. Президент Рузвелт Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен те пысăк хăрушăлăх пурри çинчен уççăнах каланă. Вăл тӳрех çапла каланă: вăрçă пуçлансан, Америкă вăрçă тулашĕнче тăрса йулма пултараймасть, пурпĕрех вăрçа хутшăнмала пулать. Çак сăмахсем тĕнчене пайлама çук принципа, урăхла каласан, Совет Сойузĕ хăйĕн тулти политикинче тытса пыракан принципа йышăннине пĕлтереççĕ.

Рузвелт кунсăр пуçне, вăрçă хăрушлăхĕнчен пĕччен тăрса йулнипе, пăрăнса, çăлăнса йулма çук тесе каланă. Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳлĕ штатсенче агрессăрсене хирĕç татăклăн кĕрешессишĕн тăракансем нейтралитет политикине хытă критиклеççĕ.

Рузвелт сăмахĕ çинчен каланă чухне унăн сăмахĕн çак вырăнĕ çинчен те шарламасăр иртсе кайма çук. Рузвелт хăйĕн сăмахĕнче пĕтĕм тĕнчери патшалăхсем хушшинче тунă договăрсене пăсакансене хирĕç кĕрешме миршăн тăракан патшалăхсем пĕрлешни кирлĕ тесе шутлать. Миршăн çине тăрса кĕрешмеле. Унсăрăн халăхсене вăрçă вучахне илсе пыракан агрессăрсене çăварлăхлама май çук.

Америкă президенчĕ миршăн тата йĕркелĕхпе хăрушăсăрлăхшăн тăракан патшалăхсем коллективлă пулса кĕрешсен çеç мирлĕ пурăнма май пуррине кăтартать.

Рузвелт сăмахĕ вăрçă пуçлакан патшалăхсем çине Америкă мĕнле пăхнине уççăнах кăтартса парать. Рузвелт хыççăнах патшалăх департамĕнт секретарĕ (йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕ) Хелл каланă сăмах Рузвелт мĕн каланине çирĕплетет. Йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕ Китай çине Йапони тапăннине Америкă сивлет, Келлог килĕшӳне тата 9 патшалăх догăвăрне пăснăшăн Йапонийе айăплать тесе каланă. Çак сăмахрах Хелл Америкă Лига наци йышăннă решенипе пĕр шухăшлă пулнине палăртнă.

Лига нацин Китай ыйтăвĕ тăрăх йышăннă резолюцийĕ тата Рузвелтпа йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕ каланă сăмахсем агрессилĕ патшалăхсен киревсĕр ĕçĕ пĕтĕм тĕнчери патшалăхсене шухăша йание кăтартса параççĕ. Агрессăрсене ирĕк пани тата „хутшăнмала мар“ текен политикă агрессийе иртĕнтерсе йанине, вĕсене пулăшнине, тĕнчери çĕнĕ вăрçăна куçаракансене хирĕç коллективлă кĕрешмелине тĕнчери общественнăç шухăшĕ лайăх пĕлсе тăрать. Миршăн тăракан патшалăхсем коллективлă пулса ĕçлесен вăрçă пуçлакансене чарма май пур.

Совет Сойузĕнчи халăх çурçĕр Америкăри пĕрлешӳлĕ штатсем тĕнчери мирлĕ пурнăçа, халăхсен лăпкă пурнăçне сыхлама миршăн тăракан патшалăхсемпе пĕрле пулса ĕçлеме хатĕр тăнине саламлама çеç пултарать.


Касса ил те усра.

ССР СОЙУЗĔН АСЛĂ СОВЕТНЕ СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН ЛИТЕРАТУРĂ

ÇАК КУНСЕНЧЕХ КОГИЗ-ăн МАГАЗИНĔСЕНЕ ИЛСЕ КИЛЕÇÇĔ.

1. МАТЕРИАЛЫ ПО КОНСТИТУЦИИ СССР, Жданов, Йаковлев тата Горкин йулташсем редакциленĕ.
2. ЧЕМ БЫЛА НАША СТРАНА В ПРОШЛОМ И ЧЕМ СТАЛА ТЕПЕРЬ. Йаковлев, Верминичев тата Смирнов йулташсен статйисем—статистикă пухăвĕ.
3. ПОЛОЖЕНИЕ О ВЫБОРАХ В ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ СССР, суйлав коммиççисен членĕсене кирлĕ пулакан хут формисене хушса хунă.
4. СССР И СТРАНЫ КАПИТАЛИЗМА. Стецки, Варга, Мехлис тата Карпински йулташсен статйисем.
5. КАЛИНИН. Что дала Советская власть трудящимся.
6. ВОРОШИЛОВ. Красная Армия и советский народ.
7. ВЫШИНСКИЙ. Положение о выборах в Верховный Совет СССР в вопросах и ответах.
8. НАША РОДИНА. Совет Сойузĕ çинчен економикăпа географи тĕлĕшпе кăтартса пани, унтах тата уйрăм республикăсем тăрăх материалсем, картăсем, диаграмсем.

Йалсоветсем, колхозсем, хапрăк-савăтсенчи, предприйатисенчи профсойузсен комитечĕсем,

Асăннă кĕнекесене туйанма КОГИЗ магазинĕсене заказ парăр.

КОГИЗ магазинĕсем: Шупашкарта, Улатăрта, Канашра, Йетĕрнере, Çĕрпӳре, Сĕнтĕрвăрринче, КОГИЗ-ăн библиотекă коллекторĕнче, çавнашкалах зайавкăсене çак адрĕспе парăр: Шупашкар, КОГИЗ, Книга почтой.

КОГИЗ-ăн Чăваш Республикĕнчи уйрăмĕ.


„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 750 Гор Чебоксары Типография № 1 Чувашгиза. Заказ № 2198. Тираж 11100. 6.58—92 см. и. и.